24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ИЮНЬ
3
ЫТЛАРИКУН
128 (5843) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Чăваш Коммуни

Çĕнĕ заема хăвăртрах вырнаçтарар!

Хаçатăн паянхи номерĕнче эпир Социализмлă Советлă Республикăсен Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне кăларасси çинчен йышăннă постановленине пичетлетпĕр.

Совет государствин заемĕсене Совет халăхĕ чĕререн хапăлласа кĕтсе илет. Çакă вăл — совет патриотизмĕн хăватлă демонстрацийĕ. Ку демонстраци пирĕн халăх хăйĕн тăван çĕршывне, Ленин—Сталин парти ĕçне, халăхсен аслă çулпуçне — Сталин юлташа чĕререн парăнса юратнине кăтартать.

Халăх хуçалăхĕн калама çук пысăк ÿсĕмĕсене хамăр вăйпах тунишĕн Совет халăхĕ чĕререн савăнать. Индустриализацин пысăк программине тата социализмлă ялхуçалăхĕн планне пирĕн çĕршыври ĕççыннисем Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ тата халăхсен гениллĕ çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пынипе ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Совет Союзĕн кашни гражданинĕ социализмлă строительствăн пысăк çитĕнĕвĕсене, наука, техника тата культура кулленех малалла аталанса ÿссе пынине хăй куçĕпе курса, хĕпĕртесе савăнать.

Сталинла пятилеткăсен çулĕсем вăхăтĕнче пирĕн вĕçĕ-хĕррисĕр анлă çĕршывра темиçе çĕр çĕнĕ хуласем, ялсем, поселоксем ÿссе çитĕнчĕç. Çĕçен хирсемпе тайгасенче, сăрт-тусем çинче промышленноçлă пысăк хуласем — Магнитогорск, Амур çинчи Комсомольск, Караганда, Хибиногорск. тата ытти те темиçе вуншарăн шăтса тухрĕç.

Совет Союзĕн ялхуçалăхĕ тĕнчере чи малта пыракан, механизациленнĕ ялхуçалăхĕ пулса тăчĕ. Колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенче халь çур миллион ытла тракторсемпе комбайнсем ĕçлеççĕ. Пирĕн çĕршыври социализмлă çĕрĕçе тĕштырă туса илес тĕлĕшпе тĕнчере пĕрремĕш вырăна йышăнса тăрать.

Социализмлă совет государствинче 36 миллион ача пуçламĕш тата вăтам шкулсенче, 657 пин çамрăк тĕрлĕ аслă шкулсенче вĕренеççĕ. Çак цифрăсем вĕсем Совет Союзĕнчи нумай миллионлă халăхсен социализмлă культури хăватлăн аталанса, чечекленсе пынине кăтартса параççĕ.

Большевикла парти тата халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин ертсе пынипе, совет халăхĕ тĕнчере чи вăйлă, никам çĕнтерейми хăватлă Хĕрлĕ Çар турĕ, ăна чи çĕнĕ те вăйлă кĕрпăшалпа пуянлатрĕ. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне малалла татах аталантарса пыма, çĕршывăн оборона пултарулăхне тĕреклетме кăçал 70,9 миллиард тенкĕ укçа уйăрса панă.

Ĕççыннисем социализмлă строительствăра пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçленипе пĕрлех, хăйсем перекетлесе хăварнă укçа тенкĕсене те çав строительствăна параççĕ, хăйсен личнăй бюджетне государство бюджечĕпе пĕрлештереççĕ. Кăна çак иртнĕ вунă çул хушшинче заем илме çыраннисен шучĕ пиллĕк хут, подписка сумми вунă хут ÿсни те питĕ лайăх кăтартса парать.

Совет заемĕсем çулран-çулах ытларах та ытларах саралса пыни пирĕн çĕршыври ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланнине: рабочисемпе служащисен ĕçукçи тата колхозниксен дохочĕ ÿснине, ĕççыннисем çĕршывăн обществăллă пуянлăхне ÿстерме, культурăна çĕклеме, ĕççыннисен материаллă пурнăçне лайăхлатма, çĕршывăн экономикăллă тата оборонăллă вăй-хăватне тĕреклетме яланах хатĕр тăнине кăтартса парать. Виççĕмĕш пятилеткăн виçĕ çулĕ хушшинче халăх дохочĕ 1937 çулта 96 миллиард пулнинчен иртнĕ çулта 125,5 миллиард тенке çити, урăхла каласан, 30 процент ÿснĕ. Хуçалăхăн виççĕмĕш пятилетка тăрăх палăртнă отраçлисенче ĕçукçи фончĕсем 82,2 миллиард тенкĕ пулнинчен 123,7 миллиард тенке çити, урăхла каласан, 1,5 хут ÿснĕ. Колхозниксем укçан илекен доходсем те 1937 çулта 14,2 миллиард тенкĕ пулнинчен 1939 çулта 18,3 миллиард тенке çити, урăхла каласан, 30 процент ÿснĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем те, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисем пекех, правительство иртнĕ çулта кăларнă Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулхи кăларăм) Заемне пысăк хастарлăхпа çыранчĕç. Кĕске вăхăтрах — 11 кун хушшинчех — çак заем пирĕн республикăра 20.815 пин тенкĕлĕх саралчĕ. Виççĕмĕш Пятилетка (иккĕмĕш çулхи кăларăм) Заем подпискипе танлаштарсан, иртнĕ çулхи заем 3.627 пин тенкĕ ытларах саралнă. Колхозниксемпе единоличниксем 4.488 пин тенкĕлĕх çыранса, виçĕм çулхи заем подпискинчен 2.331 пин тенкĕлĕх нумайрах илнĕ. Республикăри 967 колхозри колхозниксем хăйсем çыраннă заем укçисене срокченех тÿлесе татнă.

Совет государстви тата большевикла парти халăх хуçалăхне аталантарассишĕн кулленех тăрăшаççĕ. Халăх хуçалăхне аталантарас ĕçе пĕрремĕш пятилеткăра — 51 миллиард тенкĕ, иккĕмĕш пятилеткăра — 115 миллиард тенкĕ, виççĕмĕш пятилеткăн виçĕ çулĕ хушшинче — 108 миллиард тенкĕ хывнă. Çак шутран заем сарнипе пухăннă укçа-тенкĕ хисепĕ пĕрремĕш пятилеткăри капиталовложенисен пĕтĕм суминче 11 процент ытларах, иккĕмĕш пятилеткăра 18 процента яхăн, виççĕмĕш пятилеткăн иртнĕ виçĕ çулĕ хушшинче 19 процент ытларах пулнă.

Заем сарнипе пухăннă укçа халăх хуçалăхне тĕреклетес çĕре çеç мар, ĕççыннисене заемсем тăрăх тухакан выигрышсемпе процентсене тÿленĕ çĕре те нумай каять. Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче ĕççыннисене заемсем тăрăх тухнă выигрышсемпе процентсене 7,1 миллиард тенкĕ тÿленĕ.

Халăх хуçалăхĕн кăçалхи планне, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ырланă плана, пурнăçа кĕртмешкĕн пит нумай укçа-тенкĕ кирлĕ. Государствăн кăçалхи бюджечĕ тăрăх халăх хушшинче подпискăпа саракан заемсенчен 10 миллиард та 475 миллион тенкĕ пухăнмалла туса палăртса хунă. Çав шутран пирĕн Чăваш республикин 1941 çулти бюджечĕ тăрăх та халăх хушшинче заем сарнинчен 7.732 пин тенкĕ пухăнмалла.

Пĕр иккĕленмелли те çук, Совет халăхĕ кăçалхи çĕнĕ заема та, ытти çулсенчи пекех, пĕр шухăшлă пулса, хăвăрт вырнаçтарса çитерĕ. Чăваш республикинчи ĕççыннисем те çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕçре пысăк ăнăçлăхсем кăтартĕç.

Иртнĕ çулта Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулхи кăларăм) Заемне вырнаçтарас ĕçре Чкаловскипе Хĕрлĕ Чутай районĕсем ĕççыннисен пысăк организованноçне кăтартрĕç. Асăннă районсен руководителĕсем заем подпискине хăвăрт ирттернипе пĕр вăхăтрах, подписка укçине пухассине те организациленĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозниксем иртнĕ çулхи заема кĕске срокрах 173 пин тенкĕлĕх çыранса, 95 пин тенкĕ пухнă. Чкаловски районри колхозниксем 8 кун хушшинче 157 пин тенкĕлĕх çыранса, çав вăхăтрах 71 пин тенкĕ пухнă.

Иртнĕ çулта Красноармейски, Елчĕк, Элĕк, Комсомольски, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри т. ыт. районсем те заем кампанине ăнăçлăн ирттерчĕç.

Анчах, калас пулать, иртнĕ çулта заем сарас ĕçре пирĕн республикăри хăшпĕр районсем начар ĕçлерĕç.

Куславкка, Октябрьски, Çĕмĕрле, Улатăр тата Йĕпреç районĕсем иртнĕ çулта заем сарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлерĕç. Ку районсенче массăллă политикăллă ĕçе кирлĕ пек организацилемен пулнă.

Паллах, çак районсем кăçал хăйсене валли тивĕçлĕ выводсем тăвĕç, çĕнĕ заема кĕске срокрах вырнаçтарассине организацилĕç.

Парти райкомĕсемпе пуçламĕш парторганизацисен çĕнĕ заема хăвăртрах вырнаçтарас ĕçе большевикла ертсе пымалла, заем сарас ĕçе ĕççыннисен йышлă массисене активлăн хутшăнтармалла. Çĕнĕ заем çинчен кашни рабочипе служащине, кашни колхозникпа колхозницăна тĕплĕн каласа ăнлантармалла, ку ĕçе тума пултаруллă агитаторсене мобилизацилемелле. Малта пыракансен паха опычĕсем тăрăх, ĕççыннисен производствăллă тата политикăллă активлăхне вăйлăн çĕклесе пымалла.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне хăвăртрах вырнаçтарса, тăван çĕршыва, большевикла партие тата Аслă Сталина чĕререн парăнса тăнине татах тепĕр хут кăтартса парар!

Заем сарас ĕç

ЕЛЧĔК. Кушкăри комсомолецсемпе активистсем çĕнĕ заема сарас тĕлĕшпе активлăн ĕçлеме тытăнчĕç. Çĕнĕ заема пур колхозниксем те пысăк хаваслăхпа, çĕршыва татах та çирĕп тĕреклетес ĕмĕтсемпе хавхаланса çыранаççĕ. Халĕ ялта 4500 тенкĕлĕх заем сарнă, вĕсенчен нумай колхозниксем укçисене çийĕнчех тÿлесе татаççĕ. Туллимар вăтам шкул директорĕ Д. Л. Казаков юлташ 400 т., «КИМ» колхоз председателĕ Н. Софронов 200 т., Н. Уральский — бригадир 75 т. çыраннă.

Çав вăхăтрах комсомолецсем пуçарнипе иртнĕ çулсенчи тĕрлĕ заемсене тĕрĕслес ĕçе организациленĕ. Вĕсем кашни колхозник килĕнче пулса, облигацисене тĕрĕслеççĕ, вулав çуртĕнче те кашни кунах тĕрĕслÿ туса ирттереççĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн çак çулта 13 колхозник 650 тенкĕлĕх выляса илни палăрчĕ.

Н. РЫБКИН.

КАНАШ. **(Телефон тăрăх, хамăр корр.).** СССР Совнаркомĕ Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне кăларасси çинчен йышăннă постановленине районри ĕççыннисем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

«Авангард» артельри рабочисемпе служащисем правительство постановленине радио тăрăх итленĕ хыççăнах пысăк митинг туса ирттерчĕç. Çĕнĕ заема кунта ушкăнпе 10 пин тенкĕлĕх ытла çыранчĕç. Райуполнаркомзагра тата типографинче ĕçлекен рабочисемпе служащисем те çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа çыранчĕç.

СССР Совнаркомĕн Председателĕ Сталин юлташ Финлянди посланникне г. Паасикивине йышăннă

Майăн 30-мĕшĕнче Финлянди посланникĕ г. Паасикиви, хăй посланник вырăнĕнчен тухса тăван çĕршывне кайнă май, уйăрăлса калас умĕн Сталин юлташ патĕнче пулнă.

Каласу çур сехете пынă.

ГОСУДАРСТВĂН ВИÇÇĔМĔШ ПЯТИЛЕТКА (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) ЗАЕМНЕ КĂЛАРАССИ ÇИНЧЕН

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

Ĕççыннисен перекетленĕ укçисене хуçалăхпа культура строительствин задачисене пурнăçа кĕртес ĕçе хутшăнтарас, государство резервисене вăйлатас тата Совет Союзĕн оборонăллă хăватне малалла тĕреклетес шутпа, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Государствăн Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне 9 миллиард та 500 миллион тенкĕлĕх кăларас.

2. Заема 20 çуллăх срока—1941 çулти ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1961 çулти ноябрĕн 1-мĕшне çити—çулталăкне 4 процент шутĕнчен кăларас.

3. Заем облигацийĕсене тата вĕсен дохочĕсене,—ку хисепе выигрышсем те кĕреççĕ,—государство тата вырăнти налогсемпе сборсем хурассинчен хăтарас.

4. ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ тăратнă Условисене, Государствăн Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне кăлармалли Условисене çирĕплетес.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ **И. СТАЛИН.**

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Ĕçĕсен Управляющийĕ **Я. ЧАДАЕВ.**

Мускав,—Кремль.
1941 çулти июнĕн 2-мĕш.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1941 çулти июнĕн 2-мĕшĕнче çирĕплетнĕ

Государствăн Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне кăлармалли УСЛОВИСЕМ

1. Государствăн Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемĕ икĕ кăларăмран: проигрышсăр тата процентлă кăларăмран тăрать.

Проигрышсăр кăларăм облигацийĕсем тăрăх пĕтĕм дохода выигрышсемпе тÿлеççĕ, процентлă кăларăм облигацийĕсем тăрăх — купонсем тăрăх процентсемпе тÿлеççĕ.

2. Заемăн кашни кăларăмĕ разрядсем çине пайланать, разрядра 100-шер миллион тенкĕлĕх пулать.

Кашни разряд 20 пин серирен тăрать. Проигрышсăр кăларăмăн кашни разрячĕн серийĕсен номерĕсем 100.001 №-тен пуçласа 120.000 № таран пулаççĕ, процентлă кăларăмăн номерĕсем —180.001 №-тен пуçласа 200.000 № таран пулаççĕ.

Кашни серинчи облигацисен номерĕсем 1 №-тен пуçласа 50 № таран пулаççĕ.

3. Государствăн Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемĕ проигрышсăр кăларăм тăрăх 500, 200, 100, 50, 25 тата 10 тенкĕлĕх облигацисемпе тухать тата процентлă кăларăм тăрăх — 500, 200, 100 тата 25 тенкĕлĕх облигацисемпе тухать.

500 тата 200 тенкĕлĕх облигацисем пĕр серири пилĕк е икĕ çĕр тенкĕлĕх облигацисем çине пайланса пилĕк е икĕ номерлĕ пулаççĕ, çапла вара вĕсем

а) проигрышсăр кăларăмра — пĕр вăхăтрах облигаци çинче кăтартнă номерсенче кашни тухакан пилĕк е икĕ выигрыш илме;

б) процентлă кăларăмра — облигацин пĕтĕм кăтартнă хакĕнчен процентпа шутласа доход илме тивĕçлĕх параççĕ.

50, 25 тата 10 тенкĕлĕх облигацисем 100 тенкĕлĕх облигацисен пайĕсем пулаççĕ те çĕр тенкĕлĕх облигаципе илмелли выигрышран е процентлă доходран тивĕçлĕ тÿпене (çуррине, чĕрĕкне, пĕрре вуннăмĕш пайне) илме тивĕçлĕх параççĕ.

Асăрхаттарни: 25 тата 10 тенкĕлĕх облигацисене заем илме çыраннă хисеп тăрăх шутласан пысăкрах хаклă облигацисем пама май çук чухне подписчиксемпе расчет тума çеç кăлараççĕ.

4. Проигрышсăр кăларăм заемăн 100 тенкĕлĕх облигацийĕ çине, облигаци çинче кăтартнă хакпа пĕрле (çĕр тенкĕ) выигрышсем 3.000, 1.000, 500, 200 тата 150 тенкĕ тухмалла пулать.

Заемăн 20 çуллăх срокĕнче проигрышсăр кăларăмăн кашни облигацийĕ выляса илет.

Выигрыш тухнă облигацисене саплаççĕ те малаллахи тиражсенчен кăлараççĕ.

5. Проигрышсăр кăларăм тăрăх заемăн çирĕм çуллăх срокĕ хушшинче выигрышсен тиражĕсем 80 пулаççĕ.

Выигрышсен тиражĕсем, 1942 çултан пуçласа, ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ палăртса йышăннă сроксенче, кашни çулталăкра тăватшар хут пулаççĕ.

6. Выигрышсен кашни тиражĕнче проигрышсăр кăларăмăн кашни разрячĕсене, урăхла каласан, заемăн çак кăларăмĕнчи кашни 100 миллион тенки çине çакăн чухлĕ выигрышсем тухаççĕ:

Çулсем	Миçемĕш тиражсенче	3 000 тенкĕлĕ выигрышсен хисепĕ	1.000 тенкĕлĕ выигрышсен хисепĕ	500 тенкĕлĕ выигрышсен хисепĕ	200 тенкĕлĕ выигрышсен хисепĕ	150 тенкĕлĕ выигрышсен хисепĕ	Кашни тиражри пĕтĕм выигрышсен хисепĕ	Кашни тиражри выигрышсен пĕтĕм сумми (тенкĕпе)
1-мĕш çул	1—4-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	50	1.000	10.944	12.000	1.874.600
2-мĕш çул	5—8-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	50	1.000	10.944	12.000	1.874.600
3-мĕш çул	9—12-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	50	1.200	7.944	9.200	1.464.600
4-мĕш çул	13—16-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	50	1.200	7.944	9.200	1.464.600
5-мĕш çул	17—20-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	50	1.200	7.944	9.200	1.464.600
6-мĕш çул	21—24-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	100	1.400	5.794	7.300	1.207.100
7-мĕш çул	25—28-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	100	1.400	5.794	7.300	1.207.100
8-мĕш çул	29—32-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	100	1.400	5.794	7.300	1.207.100
9-мĕш çул	33—36-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	100	1.400	5.794	7.300	1.207.100
10-мĕш çул	37—40-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	100	1.400	5.794	7.300	1.207.100
11-мĕш çул	41—44-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	100	1.400	5.794	7.300	1.207.100
12-мĕш çул	45—48-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	100	1.400	5.794	7.300	1.207.100
13-мĕш çул	49—52-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	100	1.400	5.794	7.300	1.207.100
14-мĕш çул	53—56-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	100	1.400	5.794	7.300	1.207.100
15-мĕш çул	57—60-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	100	1.400	5.794	7.300	1.207.100
16-мĕш çул	61—64-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	150	1.600	11.044	12.800	2.059.600
17-мĕш çул	65—68-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	150	1.600	15.594	17.350	2.742.100
18-мĕш çул	69—72-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	150	1.600	21.494	23.250	3.627.100
19-мĕш çул	73—76-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	150	1.600	31.294	33.050	5.097.100
20-мĕш çул	77—80-ш тиражсенче кашнинчех выляврă пулаççĕ	1	5	150	1.600	37.194	33.950	5.982.100
	ПĔТĔМПЕ 80 тиражра заемăн проигрышсăр кăларăмĕн кашни миллион тенки çине выляврă пулаççĕ	80	400	8.000	110.400	881.120	1.000.000	158.888.000

7. Выигрышсем тухнă облигацисем тăрăх выляса илнĕ укçана 1962 çулти ноябрĕн 1-мĕшчен илме пултараççĕ.

Çак срок иртсе кайсан укçине илмен облигацисем хăйсен вăйне çухатаççĕ, вара вĕсемшĕн тÿлемеççĕ.

8. Заемăн процентлă кăларăмĕн облигацийĕсем тăрăх тухакан дохода купонсем тăрăх çулталăкра пĕр хут тăватă процентшар тÿлесе тăраççĕ. Купонсемшĕн тÿлемелли сроксем 1942 ç. ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса, кашни çулах ноябрĕн 1-мĕшĕнче пулса пыраççĕ.

9. Процентлă кăларăм облигацийĕсен укçине каялла тавăрса пама 1957 çулти ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнаççĕ, вара пилĕк çул хушшинче (1957, 1958, 1959, 1960 тата 1961 çулсенче) кашни çулах пĕртан пайсемпе каялла тавăрса параççĕ.

1957—1960 çулсенче укçине тавăрса памалли облигацисене — çулсерен пулакан погашени тиражĕсем тăрăх палăртаççĕ. Погашени тиражĕсене ирттермелли сроксене ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ палăртса парать.

Облигаци тытакансене облигаци укçине тавăрса панă чухне, тираж пулнă çулти ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, облигацисем çинче кăтартнă хаксене тÿлеççĕ.

Погашени тиражне тухман облигацисен укçине 1961 çулти ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа каялла тавăрса параççĕ.

10. Погашени тиражне тухнă облигацисем тăрăх купонсене тÿлесе илеççĕ, ку хисепе тираж пулса иртекен çулти ноябрĕн 1-мĕш сроклă купон та кĕрет. Малалли сроксенчи купонсене тÿлесе илмеççĕ.

11. Процентлă кăларăмăн каялла тÿлесе илме тивĕçлĕ облигацийĕсемшĕн, çавăн пекех тата тÿлемелли срокĕ тухнă купонсемшĕн те, укçисене 1962 çулти ноябрĕн 1-мĕшчен илес пулать.

Çак срок иртсе кайсан облигацисемпе купонсем хăйсен хакне çухатаççĕ, вĕсемшĕн укça тÿлемеççĕ.

**ССР Союзĕн Финанс
Халăх Комиссарĕ
А. ЗВЕРЕВ.**

ÇĔНĔ ЗАЕМА ПУРТЕ ÇЫРĂНСА ИЛЕР!

Çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç

ШĂХАСАН. Ĕççыннисем партипе правительство çĕршыв тĕреклĕхне ÿстерес тĕлĕшпе туса ирттерекен кашни мероприятинех пысăк хаваслăхпа, çĕкленÿпе кĕтсе илеççĕ. Çавăн пекех вĕсем государство «Виççĕмĕш Пятилеткăн (4-мĕш çулхи кăларăм) Заема» кăлармалла тунине тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Ăна пурте пĕр шухăшлă пулса, çĕнĕ заема, иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, тата нумайрах суммăлăх çыраннипе ответлеççĕ. Заем сарас ĕç çулран-çулах пысăк ăнăçлăхпа пулса иртет. Сăмахран акă, 1937 çулта СССР Оборонине çирĕплетес тĕлĕшпе кăларнă заема Шăхасан районĕнче пурăнакан рабочисемпе служащисем хушшинче 127.460 тенкĕлĕх сарнă, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 126.845 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Иртнĕ çулта «Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулхи кăларăм) Заемне» сарасси тата та ăнăçлăрах иртрĕ. 1940 çулта çав заема 1169 рабочипе служащисем хушшинче 217.505 тенкĕлĕх, колхозниксем хушшинче 113555 тенкĕлĕх сарнă, подпискăна 6020 колхозника явăçтарнă. Çĕнялти «Пинер», Шăхалĕнчи «Гигант», Пайгильдинри «Активист» колхоз членĕсем хăйсем çыраннă заем укçине заем кампани пынă тапхăртах тÿлесе татнă.

Çĕнĕ заема ăнăçлăн вырнаçтарса, укçине те çийĕнчех пухни — вăл ялти культурăллă-политикăллă учрежденисене тытса тăма укçа-тенкĕ парса тăрассине çăмăллатать, ĕçхалăхĕн культурăллă требованийĕсене пурнăçа кĕртессине татса парать.

Шуркасси ялсовечĕ çĕнĕ заема сарас ĕçе аван хатĕрленнĕ. Правительство çĕнĕ заема кăларасси çинчен закон йышăннине пĕлсенех, ялсоветри коммунистсемпе агитаторсем ĕççыннисем хушшинче массăллă-ăнлантаруллă ĕçе тума тытăнчĕç. Халĕ пур колхозсенче те колхозниксен пухăвĕсемпе митингĕсем пулса иртеççĕ. Ялсовечĕ çĕнĕ заема вырнаçтарас тĕлĕшпе ĕçлеме 12 уполномоченнăй уйăрнă.

Районĕпе илсен, çак мероприятине туса ирттерес ĕçре заем уполномоченнăйĕсем пулса 190 çын ĕçлеççĕ. Учрежденисенче, колхозсенче, ялсоветсем çумĕнче 98 комсод уйăрнă. Вĕсем пурте хăйсен ĕçне хастарлăн тытăнчĕç. ВКП(б) Шăхасан райкомĕпе райсовет исполкомĕ ялта заем вырнаçтарас ĕçре практикăллă пулăшу пама районти активран 31 çынна ялсене кăларса ячĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Пысăк çĕкленÿпе çыранаççĕ

Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕн фабрикинчи рабочисемпе служащисем Совет правительстви Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заемне кăларасси çинчен йышăннă постановленине пысăк çĕкленÿпе йышăнчĕç. Июнĕн 2-мĕшĕнче фабрикăн клубĕнче рабочисемпе служащисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура Совет правительстви заем кăларасси çинчен йышăннă постановленине радио тăрăх пани çинчен каласа пачĕç. Çакăн хыççăн рабочисемпе служащисем пур те пĕр çын пек пулса çĕнĕ заема пысăк хаваслăхпа çыранма тытăнчĕç.

Фабрикăри ватă работница Иванова юлташ комсод представителĕ патне пырса: çĕнĕ заема пĕр уйăхри ĕçукçи чухлĕ çыранатăп,—терĕ.

Пуху пĕтнĕ хыççăнах фабрикăри рабочисемпе работницăсем 49 çын çĕнĕ заема пысăк çĕкленÿпе çыранчĕç.

Килхуçи хĕрарăмĕсем çĕнĕ заем илме çыранаççĕ

Шупашкарта Кадыков урамĕнче пурăнакан килхуçи хĕрарăмĕсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемне кăларни çинчен сÿтсе явма Древпромсоюз çуртне пухăнчĕç. Вĕсем СССР Финанс Халăх Комиссарĕ Зверев юлташ Совет заемĕсем çинчен радио тăрăх каланă доклада тимлĕн итлерĕç.

Доклад хыççăн çĕнĕ заема илме хапăл тусах çыранаççĕ. Е. И. Маркова—60 т., Е. П. Собачева, А. П. Кочергина, В. Красильникова, З. Григорьева юлташсем 50-шар тенкĕлĕх, Смоленцева, Сахарова—25-шер тенкĕлĕх çыранчĕç. Çак килхуçи хĕрарăмĕсем çĕнĕ заема ĕççыннисем хушшинче сарас тĕлĕшпе активлăн ĕçлеме пулчĕç. Пухуранах килсем тăрăх заем сарма тухса кайрĕç.

П. Д.

Тир-сăран комбинатĕнче

Енер Шупашкарти Водопьянов ячĕпе тăракан тир-сăран комбинатĕнчи производствăпа хуçалăх активĕн канашлăвĕ пынă. Канашлу пынă вăхăтра пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Бызов юлташ 7 сехетре ушкăнпа радио итлесси çинчен пĕлтерет те радио репродукторне майлаштарать.

Канашлăва пухăннисем правительство Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулти кăларăм) Заемне кăларма йышăннă постановленине тата заем подпискин условине пысăк тимлĕхпе тата тулли кăмăлпа итлеççĕ.

Итлесе пĕтернĕ хыççăн комбинат директорĕ Семченко юлташ тухса сăмах каларĕ.

— Паян эпир,—терĕ вăл,—правительство çĕнĕ заем кăларма йышăнни çинчен итлерĕмĕр. Халĕ империализмлă иккĕмĕш вăрçă пырать. Совет çĕршывĕ кăна ирĕклĕ пурнăçпа пурăнать, социализм строительствинче пысăк çĕнтерÿсем тăвать. Партипе правительство лартнă задачăсене ăнăçлăн татса парас çĕрте государство заемĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Эпир çĕнĕ заема çыранса илсе, хамăрăн тăван çĕршывăн оборона вăй-хăватне тĕреклетме пулăшатпăр. Эпĕ çĕнĕ заема пĕр уйăхри ĕçукçи чухлĕ çыранатăп.

Канашлăва пухăннисем пурте ура çине тăраççĕ. Сĕтел патне пĕрин хыççăн тепри пырса хавасланса çĕнĕ заема çыранаççĕ.

Г. КАЛИНИН.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсем тăрăшса вĕренме пуçларĕç

СЕНТЕР. Ильинкăри пуçламĕш парторганизацинчи коммунистсем кăçал чылайĕшĕ хăйсен политикăллă пĕлӳне ӳстерес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеме тытăнчĕç. Коммунистсен политикăллă пĕлӳлĕхĕ ӳснĕ май, вĕсен производствăллă активлăхĕ те ӳсет.

Коммунист И. Лоцманов «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» тăрăшса вĕренет. Халĕ вăл «Производитель» артелĕн председателĕ пулса ĕçлет. Артель ĕçĕсем кулленех лайăхланса пыраççĕ. Парти членĕн кандидачĕ Н. Савельев юлташ та хăйĕн политикăллă пĕлӳлĕхне хăпартса пынă май колхоз производствинче стахановла ĕçлеме пуçларĕ. Çакна кура колхоз членĕсем ăна пахча-çимĕç бригадине ертсе пыма суйларĕç. Ку ĕçре вăл хăйĕн мĕнпур вăйне хурса ĕçлет.

Т. Архипов тата Г. Морозов юлташсем парти историне вĕренме тăрăшмаççĕ. Халĕ вĕсем те кружок занятисене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ. Архипов юлташ «Осоавиахим» колхозăн лашисене пăхать, Морозов юлташ «Краснофлотец» колхозра завхоз пулса ĕçлет. Юлашки вăхăтра вĕсем колхоз производствинче лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ, колхозăн обществăллă хуçалăхне çирĕплетессишĕн тăрăшаççĕ.

ВКП(б) историне вĕренмелли кружокра 22 çын вĕренет, вĕсенчен чылайĕшĕ колхоз производствинче тата обществăллă ĕçсенче активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Ялсоветра ĕçлекен коммунист С. Скворцов юлташ хăйĕн политикăллă пĕлӳлĕхне ӳстерсе пынă май, совет ĕçне нумай лайăхлатрĕ.

Г. СОЛОВЬЕВ.

Парторганизаци лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕ

ЕТĔРНЕ. Райсоюз çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци отчетпа суйлав пухăвĕ хыççăн хăйĕн ĕçне лайăхлатма тытăнчĕ. Парторганизаци секретарĕ Никитин юлташ май уйăхĕнче коммунистсен пухуне икĕ хутчен туса ирттернĕ, ĕçе план тăрăх туса пырать. Кунта 9 коммунист, пурне те партиллĕ порученисем панă. Вăл шутран Михайлов юлташ стена хаçачĕн редакторĕ пулса ĕçлет, хаçата вăл йĕркеллĕ кăларса тăрать. Аникин, Пчелкин, Маркувичун юлташсем агитаторсем пулса ĕçлеççĕ.

Майăн 26-мĕшĕнче коммунистсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура коммунистсем XVIII партконференцин решенийĕсене пурнăçласа пыни çинчен сӳтсе яврĕç.

Юлашки вăхăтра суту-илӳ ĕçĕ лайăхланни палăрать. Пĕрремĕш кварталти таварçаврăнăш планне райсоюз 105 процент, апрель уйăхĕн планне 112 процент тултарнă. Май уйăхĕнче те суту-илӳ ĕçĕ лайăх пырать. Горпон столовăйĕсемпе буфетсен отделĕн заведующийĕ коммунист Никитин юлташ лайăх ĕçлет. Столовăйсенчи апатсен пахалăхĕ лайăхланнă, ассортиментсем нумайланнă, апат хакне нумай йӳнетнĕ. Столовăй валли продуктсем: сĕт-çу, çăмарта, аш-какай илме договорсем тунă. Государство пурлăхне перекетлес ĕç лайăхланнă. Иртнĕ вăхăтсенче горпо столовăйсенче кашни кварталта 1500 тенкĕлĕх посудăсем çĕмĕрĕлнĕ пулсан, халĕ 300 тенкĕ таран чакнă. Çавнашкалах тата çăкăр пахалăхĕ те аванланнă. Горпон хăйĕн 80 пуç сысна пур.

Çаксемпе пĕрлех пуçламĕш парторганизаци ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Заготовка ĕçĕсем уйрăмах кая юлса пыраççĕ. Иртнĕ çулта заготконтора пысăк убыткăпа ĕçлени кăçалхи ĕçе чăрмантарать. Çăмарта хатĕрлес ĕçĕ апрель уйăхĕнчи планне 80 процент, тир-сăран хатĕрлессин планне 33 процент çеç тултарнă. Аш-какай хатĕрлеме тытăнман та.

А. ЧЕХОНИН.

График тăрăх ĕçлесси тата коммунистсен авангардлă ролĕ çинчен

КУСЛАВККА. Комбинатри коммунистсен юлашки вăхăтра пулса иртнĕ пухăвĕнче, главнăй инженер Волков юлташ хăйĕн докладĕнче: «комбинат тарăн прорыва, укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен те йывăрлăха кĕтĕмĕр, кун пек начар ĕçлеме никам та ирĕк паман пире», тесе каларĕ. Волков юлташ калани тĕрĕс. Комбинат майăн 23-мĕшĕ тĕлне уйăхри производствăллă плана 29 процент çеç тултарнă.

Иртнĕ вăхăтсенче хăма çуракан цех кая юлса пыни, капитальнăй ремонт туни плана тултарма чăрмантарать, тесе калатчĕç. Халĕ ĕнтĕ капитальнăй ремонт та пĕтнĕ. Майăн 14-мĕшĕнчен пуçласа, комбинатăн мĕнпур вăйĕпе ĕçе тытăнмалла пулнă. Анчах комбинатра халĕ те 3 рама çеç ĕçлет. Ыттисем бабит çуккипе ĕçлемесĕр тăраççĕ. Хăма çуракан цех 2 талăк ытла простой тунă. Машинăсене сĕрмелли çу çук, ăна нормăран ирттерсе 264 процент ытларах расходланă.

Каскалакан тата сӳптĕр тăвакан цехсенче ĕçлекен коммунистсем çак икĕ цехĕ те чарăнма пултарас хăрушлăх пурри çинчен каларĕç.

Мĕн чăрмантарать-ха халь комбината график тăрăх ĕçлесе производствăллă плана ялан тултарса пымашкăн? Кашни цех руководствинче коммунистсем тăраççĕ. Пуçламĕш партorganизацин йышĕ те пысăк. Производствăра пример кăтартса ĕçлекен коммунистсем те пур. Древцехра ĕçлекен торцовщица, коммунистка Ильина юлташ хăйĕн производствăллă планне яланах 200 процент тултарать. Ун çинчен Волков юлташ савăнса çапла каларĕ:

— Пăхăр-ха эсир, Ильина юлташ ĕçленине, çиелтен пăхсан вăл васкаса ĕçленĕ пек те курăнмасть. Унăн ĕçĕнче таттисĕр ритм пур. Вăл 480 минутăллă ĕçкунĕпе туллин усă курма тăрăшать. Унăн мĕнпур вăйхалĕ ĕç çинче, плана тултарасси çинче. Сольников, Чешинов юлташсем те примерлă ĕçлеççĕ. Анчах та комбинатра малта пыракан, стахановла ĕçлекен коммунистсен опытне сарас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Унтан та ытларах, вĕсене ĕçлеме кирлĕ условисем туса памаççĕ.

Ильина юлташ туса кăларнă продукци час-часах хăй тавра купаланса кайнипе алтăрать. Çавна пула вăл, тепĕр чухне ĕçкунĕн 30 процентне хăй таврашĕнчи продукцисене катертсе вăхăта ирттерет.

Коммунистсен авангардлă ролĕ çинчен сăмах тапратнă май, доклад тăвакан Волков юлташ та, тухса калакан коммунистсем те, пуринчен ытла Матросов, Павлов, Кондаков, Бабкин юлташсем çинчен нумай чарăнса тăчĕç.

Матросов юлташ — снабжени отделĕн начальникĕ. Анчах вăл хăй ĕçне тĕплĕн туса пымасть. Комбинатра час-часах тимĕр çитмест. Матросов юлташ иртнĕ çулта планпа пăхнă тимĕре Хусантан илсе килмен. Кăçалхи фонда та кайса илмен. Шăратнă тимĕр васкавлă кӳрсе килмелле. Вăл тимĕр 7 уйăх ĕнтĕ Шупашкар хулинче выртать.

Бабкин юлташ — транспорт отделĕн начальникĕ. Анчах автомашинăсем начар ĕçлеççĕ. Çавна пула цехсенче продукцисем талăкшар выртаççĕ. Комбинат территоринчи çӳп-çапсене халиччен те тасатман. Шоферсем хушшинче дисциплина начар. Вĕсем ĕçе вăхăтра тухмаççĕ, ĕç вăхăтĕнчех машинăсене гаража кĕртсе лартаççĕ.

Павлов юлташ — каскалакан цех начальникĕ. Унăн цехĕ хăйĕн производствăллă планне 27 процент çеç тултарнă.

Коммунистсем нумайĕшĕ производствăра малти ретре пымаççĕ. Çапах та пуçламĕш парторганизаци XVIII партконференци решенийĕсене, отчетпа суйлав пухăвĕнче коммунистсем хушса хăварнине çителĕксĕр пурнăçлать. Комбинатри рабочисем, служащисем, инженерно-технически работниксем дзержинецсен чĕнĕвне хапăлласах йышăнчĕç, комбинатăн çурçулхи производствăллă планне июнĕн 28-мĕшĕччен кая мар тултарма пулчĕç. Çак обязательствăна пурнăçа кĕртессинче коммунистсем пур ĕçре те примерлă пулмалла.

Н. МРАНЬКА.

Отчетпа суйлав пухăвĕсем хыççăн

ÇĔМĔРЛЕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсем коммунистсен активлăхĕ, пĕлĕвĕ ӳссе пынине лайăх кăтартрĕç. Малтан парторганизаци секретарĕ пулса ĕçленисенчен 14 çын татах тепĕр хут суйланнă, вĕсен ĕçне пур организацисенче те вăтам тесе хакланă. Çĕнĕрен суйланă коммунистсем пурте çамрăк.

Отчетпа суйлав пухăвĕсенче парторганизацисен ĕçне лайăхлатма кирлĕ хаклă сĕнӳсем парса хăварчĕç.

Отчетпа суйлав пухăвĕсем хыççăн чылай парторганизацисенче ĕçсем лайăхланни палăрать. «Большевик» заводри партбюро юлашки вăхăтра уйрăмах тимлĕн ĕçе тытăнчĕ. XVIII партконференцийĕн решенийĕсене пурнăçласа пынă май, завод хăйĕн производствăллă планне йĕркеллĕн, график тăрăх тултарса пыма пуçларĕ, ĕç тухăçлăхĕ те ӳссех пырать.

Хударти пуçламĕш организацин пухăвĕнче иртнĕ çулта колхозра пулнă çитменлĕхсене палăртнăччĕ. Халĕ ку парторганизаци колхоз производствипе ытларах интересленме пуçларĕ. Çанталăк кăçал япăх тăчĕ пулсан та, колхоз ака ĕçне 6 кун вырăнне 5,5 кунтах вĕçлерĕ, агротехника правилисене пăснисем пĕртте пулмарĕç. Кунта кашни бригада, звено пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленĕ. Сеяльщик С. Тихонов 11 ретлĕ сеялкăпа кашни кунах нормăна ирттерсе тултарнă. Колхоз председателĕ коммунист Мозяков юлташ хăйне шанса панă ĕçе тивĕçлĕн пурнăçласа пырать.

Çĕмĕрлери машинно-тракторнăй станци иртнĕ çулти плана тултарайман. Парторганизаци (секретарĕ Мороз юлташ пулнă) трактористсем хушшинче социализмлă ăмăртупа стахановла движенине пуçарса ертсе пыман, политикăллă-массăллă ĕç те начар пулнă. Отчетпа суйлав пухăвĕнче коммунистсем парторганизаци секретарĕн ĕçне хытă критиклерĕç, унăн ĕçне начар тесе йышăнчĕç.

Халĕ кунти парторганизацин ĕçĕсем те лайăхлансах пыраççĕ. Парторганизаци секретарĕ çамрăк коммунист Стафик юлташ массăпа таччăн çыхăнса ĕçлет, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем тăвать. Уйрăм бригадăсенче ăмăртăва лайăх организациленĕ. Павлов юлташ ертсе пыракан трактористсен бригади тĕштырăсем акмалли плана 105 процент тултарчĕ, 432 тенкĕлĕх горючи перекетлерĕ. Уйрăм трактористсем: Чекменев юлташ нормăна 127 процент, комсомолецсем Аношин, Булыгин юлташсем 120—150 процент тултарса пычĕç. Парти членĕ С. Медведев юлташ кунне 5,4 гектар сухалас вырăнне 8—9 гектар сухаланă.

Ку ĕçсем пуçламĕшĕ кăна-ха. Малашне кашни пуçламĕш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕсенче йышăннă решенисене пурнăçлассишĕн татах та лайăхрах, тимлĕрех ĕçлемелле.

Е. САВАДЕРОВ.

ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн оргинструкторски отдел заведующийĕ.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемĕ—ССР Союзĕнчи ĕççыннисем хăйсен социализмлă государствине кивçен укçа пани пулать

Заем çырăнса илесси—кашни совет гражданинăн тивĕçĕ

Ленинградри ĕççыннисем государствăна 3 миллиард тенке яхăн кивçен панă

ЛЕНИНГРАД, майăн 30-мĕш. (ТАСС). 1929 çулпа 1940 çул хушшинче Ленин хулинчи ĕççыннисем государство заемĕсен облигацийĕсене 2.973.400 пин тенкĕлĕх илнĕ, сталинла виççĕмĕш пятилеткăн виçĕ çулĕ хушшинче кăна 1.314.200 пин тенкĕлĕх илнĕ.

Ленинградри ĕççыннисем заемсене кашни çул ытларах та ытларах çырăнаççĕ. 1929 çулта индустриализацин виççĕмĕш заемне вырнаçтарнă вăхăтра 831 пин çын 62.600 пин тенкĕлĕх облигаци туяннă, иртнĕ çулта вара виççĕмĕш пятилетка (виççĕмĕш çулти кăларăм) заемне Ленинградри 1.500 пин ĕççынни 521.200 пин тенкĕлĕх туяннă.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш пятилеткăсен çулĕсенче кăна Ленинградри ĕççыннисене заемсем тăрăх 471 миллион тенкĕ чухлĕ доход тӳленĕ. 1932 çулпа 1940 çул хушшинче вырнаçтарнă заемсен сумминчен Ленинградăн вырăнти бюджетне 385.600 пин тенкĕ уйăрса панă.

Заемсемпе илнĕ выигрышсем

1938 çулпа 1941 çул хушшинче Свердловск облаçĕнчи перекет кассисем государство заемĕсен облигацийĕсем тăрăх ĕççыннисене 40 миллион тенкĕ ытла выигрыш тӳленĕ. Кăçалхи 4 уйăх хушшинче 7 миллион тенкĕ тӳленĕ.

14.326 пин тенкĕ выляв укçи тӳленĕ

Виççĕмĕш пятилетка çулĕсенче пирĕн республикăра заем тытакансене выигрышсем нумай тӳленĕ. Уйрăм çулсем тăрăх илсен: 1938 çулта 1.206 пин тенкĕ, 1939 çулта—1.319 пин тенкĕ, 1940 çулта—1.999 пин тенкĕ, 1941 çулти 4 уйăх хушшинче—1.006 пин тенкĕ выляв укçи тӳленĕ.

Иккĕмĕш тата виççĕмĕш пятилеткăсен çулĕсенче пурĕ пĕрле илсен 14.326.000 тенкĕ тӳленĕ.

Ялхуçалăх институтĕнчи студентсем экзамен параççĕ

Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчи студентсем нумаях та пулмасть IV курсра вĕреннĕ юлташĕсене практикăллă ĕçе ăсатрĕç. Вĕсем хушшинче отличник-комсомолецсем Рябова, Моросин, Харьков, Тимофеев юлташсем те пулнă.

Халĕ çак комсомолецсем Челябинск облаçĕнче ĕçлеççĕ. Вĕсем Челябинск облаçĕнчи районсенче — çĕрĕç пайĕсен, машинно-тракторнăй станцисен старший агрономĕсем.

Институт халĕ экзаменсем умĕнче тăрать. Тата эрнене яхăн вăхăт иртсен, пур курссенче те хĕрӳллĕ тапхăр пуçланать. Вăхăт çитиччĕнех экзамен тытасси институтра анлăнах сарăлман пулин те, хăшпĕр курссенче экзамен паракансем пулнă. Çак экзаменсенче студентсем хăйсем суйласа илнĕ специальноçе чĕререн юратни, вĕренӳ çине килĕштерсе пăхни курăнать.

Институтра агрономи факультетĕнче V курс чаплă ятпа тăрать. Унăн аллинче — куçса çӳрекен хĕрлĕ ялав. Çакă хĕрлĕ ялавлă курс государство экзаменĕсене лайăх хатĕрленсе çитнине кăтартса панă. Пĕтĕмпе 75 процент «отлично» отметкăсем илнĕ. Çавăн пекех, IV курсра вĕренекенсем илнĕ мĕнпур отметкăсенчен 60 проценчĕ «отлично».

Уйрăмăнах Дмитриева, Цветкова, Альбицкая, Александров, Николаев студентсене асăнмалла. Вĕсем экзаменсем умĕнхи зачетсене лайăх хатĕрленнĕ.

Çак кунсенче II курсра вĕренекенсем марксизм-ленинизм никĕсĕсем предметпа экзамен панă. Студент Бушуев ку предметпа «отлично» отметка илнĕ.

Анчах çакна та каламалла. Институтра кашни студент экзаменсене тĕплĕн хатĕрлентĕр тесе нимĕнех те туман. Кĕркунне аслă курссенче вĕренекен студент-отличниксемпе кĕçĕн курссенчи студентсем тĕлпулусем туса ирттеркеленĕ те, чарăнса ларнă. Халĕ, экзаменсем çитес умĕн, ку метод та, урăх майсемпе ĕçлесси те кирлĕ пек пулса пыман.

Студентсенчен хăшпĕрисем экзаменсене хатĕрленмесĕр пынисем пулнă. Халĕ те пачах хатĕрленмесĕр, пушă вăхăта уссăр ирттерекенсем пур. Ф. студент экзамена пырсан урăх студентăн тетрачĕ тăрăх ответсем хатĕрленĕ те профессор умĕнче «ответлеме» тăнă. Вăлах зачетсене те хатĕрленмесĕр пынă.

I курсра вĕренекенсем хушшинче те çакнашкал тĕслĕхсем пулнă.

Часах пур факультетсенче те экзаменсем пуçланаççĕ. Вĕсене лайăх хатĕрленнипе кĕтсе илмелле.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

Осоавиахимовецсем çар ĕçне вĕренеççĕ

ВĂРМАР. Çĕнĕ Вĕренерти пуçламĕш организаци осоавиахимовецсене тата колхозниксене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе аван ĕçлет. Апрель уйăхĕнче 105 сехетлĕ программăпа 46 çынна вĕрентсе кăларнă. Вĕсем нумайĕшĕ оборона значокĕсен нормисене панă. Ворошиловла стрелокăн пĕрремĕш сыпăклă значокне илме 38 çынна вĕрентсе хатĕрленĕ.

Çар ĕçне вĕреннĕ хыççăн колхозниксем Осоавиахим членне кĕреççĕ. Юлашки вăхăтра 14 çын хутшăннă. Вĕсем оборона енĕпе активлăн ĕçлесе пыраççĕ.

Осоавиахимовецсене тата колхозниксене çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çартан таврăннă кĕçĕн командирсем А. Антонов, В. Анисимов, Андриянов юлташсем тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем осоавиахимовецсене Хĕрлĕ Çар пурнăçне хăнăхма вĕрентрĕç.

Пуçламĕш организаци çуллахи вĕренĕве йĕркелеме тăрăшать. Тактикăллă занятисем, походсем туса ирттерме палăртнă. Çавăн пекех оборона значокĕсен çуллахи нормисене пама хатĕрленеççĕ.

В. ТУРТУШ.

Артиллери кучухнехи вăрçăра

Хальхи вăхăтра пыракан империализмлă вăрçă хăйĕн орбитине çĕр чăмăрĕ çинчи халăхăн тăваттăмĕш пайĕнчен виççĕмĕш пайне яхăн туртса кĕртнĕ. Капитализмлă государствăсен миллионшар çарĕсем Европăра, Африкăра тата Азире çапăçаççĕ, вăрçăна пула çĕршер хуласене çĕмĕрсе аркатаççĕ. Материальнăй средствăсене расходланин хисепĕ, вăрçă вăрçакан çĕршывсем тӳсекен жертвăсен хисепĕ тĕлĕшпе тĕнчери иккĕмĕш вăрçă тĕнчери пĕрремĕш вăрçăран та иртсе каять.

Кучухнехи çапăçусемпе операцисем те пачах урăх майлă пулса пыраççĕ. Çак уйрăмлăх вăл иртнĕ çĕрçуллăхра Ф. Энгельс кăларса тăратнă положенирен тухса тăрать: «Çарпа флот пек экономикăллă условисенчен пысăккăн килекенни урăх çук та. Вооружени, состав, организаци, тактикăпа стратеги чи малтанах çав самантра производство шайĕ тата çулйĕрсем мĕнле пулнинчен килеççĕ».

Пурне те паллă, капитализмлă тĕнче, хальхи вăрçăна хатĕрленнĕ чухне, пуринчен малтан 1914—1918 çулсенчи вăрçăн опытне шута илнĕ, çака вăл çар техникине вăйлăн аталантарса çĕнетнинче палăрчĕ.

Тĕнчери иккĕмĕш вăрçăн опычĕ çакна çирĕплетсе пачĕ: кучухнехи çапăçусенче артиллери калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать, артиллерипе массăллăн усă курни противника çапăçу тата мораль тĕлĕшĕнчен те вăйлăн воздействи парать, çакна пула прорыв тăвассине тата çав прорыва сарса пыракан подвижной группăсене çапăçăва кĕртессине хăвăрттăн пурнăçлама май парать.

Кучухнехи çарсенче артиллери средствисем мĕнтери вăйли çакăнтан та курăнать: 1939 çултах ĕнтĕ стрелковăй корпус артиллерийĕн залпĕ Францире 6373 килограмм, Германире—6078 килограмм шутланнă, Хĕрлĕ Çарăн стрелковăй корпусĕнче вара—7136 килограмм шутланнă. Пирĕн Хĕрлĕ Çарта артиллери хисепĕ 1934 çултан пуçласа 1939 çула çитиччен çăмăл артиллери тăрăх 34 процент, вăтам артиллери тăрăх—26 процент, йывăр артиллери тăрăх—85 процент, зенитлă артиллери тăрăх—169 процент чухлĕ ӳснĕ. Хĕрлĕ Çарăн танксене хирĕç кĕрешекен артиллерийĕ 1930 çултан пуçласа 1939 çула çитиччĕнхи хушăра нумай хут ӳснĕ.

Пуриншĕн те паллă, 1939 çултан пуçласа совет артиллерийĕн хăвачĕ татах темиçе хут ӳснĕ. Уйрăмăнах пирĕн зенитлă артиллери вăйлăн ӳсрĕ, вăл артиллери кучухнехи вăрçăра чылай пысăк вырăн йышăнса тăрать. Тăватшар ретĕн вырнаçтарса тухнă зенитлă пулеметсем, тĕрлĕ калибрлă зенитлă тупăсем, йывăр, виçĕ тĕнеллĕ машинăсен ятарласа тунă платформисем çинче вырнаçтарса лартнăскерсем, — çаксем пурте тăшман самолечĕсене хирĕç заградительнăй хăватлă огневой завеса туса хураççĕ.

Чылай вăхăт хушши малтан туса хунă войскăсенчен пĕри, артиллери, XVI—XVII ĕмĕрсенчен пуçласа вăйлăн аталанма тытăннă. Çак вăхăтран пуçласа, артиллери пит пысăк вырăн йышăнса тăман çапăçусем пĕрре те пулман, артиллери пур çапăçусенче те паллă вырăнта тăнă.

Артиллери Наполеон вăрçисен тапхăрĕнче те вăйлăн аталаннă. Паллă, наполеонла çапăçусенче артиллери яланах хăйĕн хăватлă вăйĕпе çапăçу операцийĕсем мĕнпе вĕçленессине татса панă.

XIX ĕмĕр вĕçĕнче çапăçусем пынă çĕрте нарезной хĕçпăшалпа усă курни артиллерин çапăçури рольне тата пĕлтерĕшне татах та ытларах çĕкленĕ. Çакă вăл уйрăмăнах тĕнчери империализмлă пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче палăрнă.

1917—1918 çулсенчи çапăçусем вăрçă пыракан вырăнсенче артиллерипе калама çук пысăккăн усă курнипе палăрса тăраççĕ. 1917 çулти августăн 20—26-мĕшсенче Верден патĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче 17 километр тăршшĕ фронтра французсем çăмăл орудисем 948 тата йывăр орудисем 1318 оруди, пысăк мощноçлă орудисем 66 тата траншейнăй артиллери орудийĕсене 247 оруди пухса тăратнă пулнă.

1917 çулти октябрьте Мальмезон патĕнчи операци вăхăтĕнче французсем 6 кун хушшинче 10 километр чухлĕ фронтра çитмĕл пиллĕк миллиметрлă снарядсем 17500 тонна тата йывăр снарядсем 3600 тонна кăларса янă.

Фронтăн артиллери тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе вăрçă вăрçакан çĕршывсем 1914—1918 çулсем хушшинче тĕрлĕ системăллă тата калибрлă орудисем çакăн чухлĕ туса кăларнă: Англия—27 пин оруди, Франция—21 пин, Италия—10 пин, Россия—17 пин тата Германия—36,8 пин оруди.

Тĕнчери пĕрремĕш вăрçă пуçламĕшĕнче ытти тĕрлĕ войскăсем хушшинче артиллерин удельнăй виçи вăтамăн 15 процент шутланнă пулсан, вăрçă пĕтнĕ тĕле çав виçе Германире 23 процент таран, Англире—27,6 процент таран, Францире—35,7 процент таран пулнă. Вăрçă артиллерине хисеп тĕлĕшĕнчен ӳстерме кăна мар, тата унăн пахалăхне те лайăхлатма ыйтнă. Çак тĕлĕшпе конструкторла шухăш çине тăрсах ĕçленĕ.

Тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче артиллери пахалăхне кучухнехи артиллерипе танлаштарсан, çакăн пек картина тухса тăрать: çитмĕл пилĕк миллиметрлă тупăн инçете пересси 120 процент, унăн начальнăй скороçĕ—32 процент ӳснĕ; 105 миллиметрлă тупăн 42 тата 23 процент, 155 миллиметрлă гаубицăн—16 тата 37 процент ӳснĕ.

Калама та кирлĕ мар, тĕнчери иккĕмĕш вăрçă пуçламĕшĕ тĕлне артиллери техники, 1918 çулти вăрçăпа танлаштарсан, пит нумай малалла кайнă. Артиллери техникине çĕнетсе пыни унпа усă курас ыйтăва кăларса тăратнă.

Вăрçă артиллерипе пехота тата танксем пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлемелле тума ыйтнă. Артиллерирен перессине вăхăт тата объектсем (цельсем) тăрăх планлаççĕ. Артиллерин инçете перес вăйне ӳстерни артиллерине эшелонсемпе малалла тарăннăн кĕмелле тума май панă, çакна пула наступлени туса пыракан пехотăпа танксем артиллерирен тăтăшах пулăшу илсе тăраççĕ.

Кучухнехи системăсен скорострельноçĕ артиллерирен çĕнĕ майпа перессине—заградительнăй огонь, çавăн пекех «огневой вал» тенĕскерне туса хунă, артиллерирен çав майсемпе персе тăни наступлени туса пыракан танксемпе пехотăна противник персе тăрассинчен хӳтлет.

Артиллери атакăна хатĕрлет кăна мар, вăл тата противника резервсене илсе пыма тата контратака тума чăрмантарать, противник артиллерине хирĕç ăнăçлăн кĕрешет. Çак кĕрешӳ пысăк усă парать, мĕншĕн тесен вăл кĕрешӳре авиаципе, корректирующий огонь тенĕскерпе, çавăн пекех инструментальнăй разведка средствисемпе анлăн усă кураççĕ.

Артиллери, юлашки вăхăтри вăрçăсен опычĕ кăтартса панă тăрăх, çĕр çинчи ытти мĕнпур войскăсемпе танлаштарсан, пит хăватлă вăй пулнипе палăрса тăрать. Наступлени тунă чухне артиллери хăйĕн пехотипе танкĕсене çул уçса парать тата наступлени тăвакан противникăн çулне картлать. Кучухнехи йывăр артиллери пит хăватлăн пени фортификациллĕ тахçанхи вăйлă сооруженисене çĕмĕрсе тăкать.

«Берлинер берзен цейтунг» хаçат иртнĕ çулти октябрьте çапла çырнă: «Пехотăн чи шанчăклă помощници гаубицăллă çăмăл артиллери (105 миллиметрли) пулса тăрать. Çак гаубица Францие хирĕç пынă вăрçăра танксене, бронемашинăсене, убежищĕсене тата огневой точкăсене пĕтерсе тăкнă».

Хĕвеланăçри вăрçă çакна çирĕплетсе пачĕ: çапăçусем пынă çĕрте войскăсен мĕнпур ĕçне артиллери пулăшса тăни кирлĕ, кучухнехи çапăçусенче артиллерирен перессине массированно туса пыраççĕ. Кучухнехи системăллă орудисен горизонтально перес уголне чылаях ӳстерни тĕрĕс направленипе пеме, дальнобойноçа—тарăнтарах тума май парать.

Кучухнехи çарсене танксемпе пуянлатни, çавăн пекех танксемпе, механизированнăй чаçсемпе тата соединенисемпе анлăн усă курни çĕнĕ йышши артиллери-танксене хирĕç кĕрешмелли артиллерине вăйлатасси патне илсе пынă. Танксене хирĕç кĕрешекен артиллерин скорострельноçĕ пысăк тата снарядсен начальнăй скороçĕ те пысăк, çавăнпа та вăл артиллери танксене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте вирлĕ средство пулса тăрать. Танксене хирĕç кĕрешекен кучухнехи орудисем 500—1000 метр хушăран (калибр мĕнлине кура) танкăн 50 миллиметр хулăмĕш бронине шăтарма пултараççĕ. Ютçĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен Францири вăрçă вăхăтĕнче 2000 танк ытла пĕтнĕ; вĕсенчен чылай пысăк пайне Францин танксемпе кĕрешекен артиллерийĕ стройран кăларнă.

Танксемпе кĕрешекен артиллерипе пĕрлех вăрçă зенитлă артиллерине те вăйлатса пыма ыйтнă. Кучухнехи самолет мĕнтери çӳле хăпарма тата мĕнтери хăвăрт вĕçме пултарнине кура, кучухнехи зенитлă артиллерин çӳлелле пересси те, унăн скорострельноçĕ тата снарядсен начальнăй скороçĕ те ӳссе пынă.

Англин 40 миллиметрлă «Бофорса» текен тупă минутăра 100 снаряд кăларса яма пултарать, снарядсем 4300 метр çӳллĕшне хăпарма пултараççĕ.

Мускав совечĕн Хĕрлĕ Çар XX çул тултарнă ятпа пулнă савăнăçлă ларăвĕнче каланă сăмахра Совет Союзĕн маршалĕ К. Е. Ворошилов çапла каланă: «артиллери, çĕнтермелли питех те вăйлă боевой средствăсем, сăмахран, танксем тата авиаци, пур пулсан та, кучухнехи вăрçăра тĕрлĕ йышши войскăсенчен чи кирли пулса юлать». Ворошилов юлташ кунта тата çакна паллă тунă: артиллери ыйтăвĕсемпе «тӳррĕмĕнех Сталин юлташ хăй ĕçлет».

Сталин юлташ каланă тăрăх, артиллери — кучухнехи вăрçăн турри.

Сталинла пятилеткăсем социализм çĕршывĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен артиллерийĕн вăйĕпе хăватне нихăçанхинчен ытла çĕклерĕç. Çак вăя совет артиллерийĕ белофиннсене хирĕç пынă çапăçусен кунĕсенче уççăн кăтартса пачĕ.

Пирĕн артиллери финн салтакĕсене çĕмĕрмеллипех çĕмĕрнĕ, вĕсене калама çук пысăк сухатусем кӳнĕ. Вăл Маннергейм линийĕн тимĕрпе бетонран тунă сооруженийĕсене аплипех аркатса тăкнă. Тастоламмет кӳлли районĕнче тимĕрпе бетонран тунă 167-мĕш номерлĕ дота, ăна 32 сантиметр хулăмĕш броняпа витсе тунă пулсан та, ним юлмиччĕнех аркатса тăкнă. Совет Союзĕн Геройĕ майор Ниловский ертсе пыракан артиллери чаçĕсем артиллерирен пит вăйлăн персе тăнипе «Молоток» ращари дотсене ним хăвармиччен аркатса тăкнă, тимĕрпе бетонран тунă сооруженисенчен ванчăксем анчах тăрса юлнă.

Çакăн пек ĕнтĕ совет орудийĕсен çĕмĕрсе тăкас вăй-хăвачĕ.

Кучухнехи вăрçăн опытне шута илсе тата ăна вĕренсе пырса, пирĕн артиллери, вăрçă чухнехи пек боевой условисенче, хăйĕн çапăçас пултарулăхне ӳстерсе пырать, тĕл перес тата ытти йышши войскăсемпе таччăн çыхăнса ĕçлес искусствăна чаплăн вĕренсе пырать. Тăван çĕршывшăн малашне пулас çапăçусенче хĕрлĕ артиллери массированнăй майпа персе тăнипе хăйĕн социализм тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкакан пехотипе танкĕсене çул туса пырĕ.

Артиллери генерал-майорĕ **В. ШЕРЕМЕТОВ.**

Заем сарас ĕçе хăвăрт тата тĕплĕн туса ирттерер!

Пирĕн республикăри ĕççыннисем, пĕтĕм Совет Союзĕнчи ĕççыннисем пекех, Правительство государствăн çĕнĕ заемне — Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулти кăларăм) заемне кăларни çинчен калакан пĕлтерĕве пысăк çĕкленÿпе кĕтсе илчĕç. Правительство йышăннă постановленине радио тăрăх парсанах, заводсенче, предприятисенче, учрежденисенче тата колхозсенче нумай çынлă митингсем пулса иртрĕç, çĕнĕ заема çырăнас ĕç пуçланчĕ.

Государствăн çĕнĕ заемне пирĕн тăван çĕршывăн чиккисен лешъенче империализмлă иккĕмĕш вăрçă ытларах та ытларах сарăлса пынă вăхăтра, Европăри, Азири тата Африкăри миллиард çурă ытла ĕççыннисене юнлă вăрçа туртса кĕртнĕ вăхăтра, çак вăрçă уйрăм государствăсен чиккисене аркатса, пĕр-пĕтĕм государствăсене пĕтерсе пынă вăхăтра кăларнă.

Совет Союзĕнчи халăхсем çак империализмлă вăрçă тулашĕнче тăраççĕ. Аслă Сталинăн аслă кăтартăвĕсем тăрăх ĕçлесе, пирĕн правительство мирпе нейтралитет политикине çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырать. Анчах та эпир капитализмлă йĕритавралăх çинчен, пирĕн тăван çĕршыв çине хĕçпăшалпа килсе тапăнас хăрушлăх çинчен пĕр самантлăха та манма пултараймастпăр. Тĕнчери çак йывăр обстановкăра аслă Сталин хамăрăн социализмлă тăван çĕршывăн хуçалăхĕпе оборонин хăватне пур майсемпе те çирĕплетсе пыма кирли çинчен панă кăтартусене Совет Союзĕнчи халăхсем яланах асра тытаççĕ.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем çакна лайăх пĕлеççĕ: государство заемĕсенчен пухăнакан средствăсем халăх пурнăçне лайăхлатас ĕçе, халăх хуçалăхĕпе культурине вăйлатас, çĕршывăн оборонине çирĕплетес ĕçе каяççĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн çĕршыври ĕççыннисем государство заемĕсене саламласа кĕтсе илеççĕ, вĕсене çырăнса илсе, пирĕн пĕтĕм халăх правительствăна тата партине вĕçĕ-хĕррисĕр юратнине кăтартса парать.

Орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем тăван çĕршыв умĕнче хăйсен тивĕçлăхне чыслăн пурнăçа кĕртеççĕ, хăйсен перекетленĕ средствисене государствăна кивçен параççĕ, çакна ăна иртнĕ çулсенчи заемсене çырăнас ĕç лайăх иртни, çĕнĕ заема çырăнас ĕç анлăн сарăлса кайни кăтартса парать.

Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулти кăларăм) заемĕ халиччен кăларнă заемсенчен чи пысăк заем пулса тăрать, ăна 9,5 миллиард тенкĕлĕх кăларнă. Парти, совет, профсоюз организацийĕсемпе обществăллă организацисен задачи — заем çырăнас ĕçе политикăллă çÿлĕ пусăмра ирттерессн, заем тăрăх средствăсем пухас ĕçе лайăх организацилесси пулса тăрать. Заем тĕлĕшĕнчи массăллă-политикăллă ĕçĕн пуян опычĕпе усă курса, иртнĕ çулсенчи йăнăшсене асра тытса ĕçлесе, бюджет суммине кашни районра, хулара, кашни ялтах тултармалла тата ирттерсе тултармалла.

Пуринчен те паллă, иртнĕ çулта пирĕн республика заем сарас ĕçе тепрен илсен 10 кун хушшинче туса пĕтерчĕ, çак вăхăт хушшинче ĕççыннисем заема 20 миллион тенкĕлĕх ытла çырăннă. Кăçалхи çул заем çырăнас ĕçе татах та лайăхрах организацилес, ăна чи кĕске срокесенче ирттерес пулать.

Çĕнĕ заема çырăнас ĕç: «Ик-виç эрнери ĕçукçине государствăна кивçен парар» текен лозунгпа иртсе пырать. Анчах, нимĕн иккĕленмелли те çук, нумай рабочисем, служащисем тата колхозниксем, иртнĕ çулсенчи пекех, заема пĕр уйăхри ĕçукçилĕх çырăнĕç.

Государствăн кашни заемне ĕççыннисем калама çук хапăл туса çыранни вăл — çак ĕçе самотек аллине пама юраннине пĕлтермест, йăлтах урăхла, ăна организацилемелле, партипе совет активне, агитаторсемпе пропагандистсене заем сарас ĕçĕн участокĕсем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла. Политика енчен тата халăх хуçалăхĕ тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăракан çак ĕçе шăпах вĕсем ертсе пыма тивĕçлĕ.

Парти, совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсем, финанс оргăнĕсемпе перекет кассисем çĕнĕ заема сарассине организацилесе ирттерес ĕçе чи активлăн хутшăнма тивĕçлĕ.

Заема ялта сарас ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн пăхмалла.

Агитаципе пропаганда тата мĕнпур организациллĕ ĕçе кунта кашни колхозникпа колхозница, кашни хресчен-единоличник хăйĕн тупăшне кура заема çырăнса илтĕр тесе туса пымалла.

Колхоз стройĕ çĕнтерни тата пирĕн колхозниксен пурнăçĕ ÿссе, тĕрекленсе пыни ялта заема ăнăçлăн вырнаçтарма пысăк майсем туса пачĕ. Иртнĕ çулта пирĕн республикăри колхозниксем тата хресчен-единоличниксем 4488 пин тенкĕлĕх, е малтанхи çултан 45,8 процент ытларах заем çырăнса илнĕ. Анчах, çак сумма ялта заем вырнаçтармалли пысăк майсемпе туллин усă курнине кăтартса памасть-ха.

Заем ĕçĕнче ялсоветсен заем енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, вĕсем пирĕн республикăра 4500 çын ытларах шутланаççĕ. Колхозниксем, хресчен-единоличниксем хушшинче заема ăнăçлăн вырнаçтарасси заем уполномоченнăйĕсем мĕнле ĕçленинчен килет. Ялсоветсен заем енĕпе ĕçлекен уполномоченнăйĕсен составĕ çирĕп, пултаруллă пулни питех те кирлĕ.

Анчах иртнĕ çулта чылай районсенче уполномоченнăйсем начар ĕçлерĕç, вĕсене япăх инструкциленĕ, вĕсенчен чылайĕшĕ заем подпискине йĕркелеме пĕлмен. Хăшпĕр районсенче, сăмахран, Куславкка, Октябрьски районĕсенче, заем уполномоченнăйсем уйăрас ĕç çине çиелтен пăхнă. Çавна пула уполномоченнăйсем хушшинче авторитетсăр çынсем те пулнă. Çакна кăçал шута илмелле. Уполномоченнăйсем пулса ĕçлеме ялсоветсен колхоз производствинче малта пыракансене, ялти халăх шанакан тата хисеплекен çынсене уйăрмалла.

Райсоветсен исполкомĕсен, финанс оргăнĕсен тата перекет кассисен заем уполномоченнăйĕсене кулленех ертсе пымалла, ĕçре практикăллă пулăшу памалла, вĕсем хăйсен обязанноçĕсене мĕнле туса пынине тăтăшах тĕрĕслемелле.

Заема вырнаçтарнин результатне заемшăн бюджета мĕн чухлĕ укçа хывни тăрăх палăртаççĕ. Çавăнпа та ялта заем сарнипе пĕр вăхăтрах укçине те пухмалла. Çакăн пек тумалла: кашни колхозник е хресчен-единоличник заема çырăннă чухнех укçине те тÿлеме пултартăр. Заемшăн укçине срокченех тÿлесе татасси — нумай колхозниксен йăлине кĕнĕ. Иртнĕ çулта Хĕрлĕ Чутай тата Чкаловски районсенчи колхозниксем заема çырăннă вăхăтрах укçине 70 процент таран тÿлесе татнă. Колхозниксен чаплă пуçарăвне çĕклентерсе, хавхалантарса пымалла.

Парти, совет, комсомол тата профсоюз организацийĕсен, çавнашкалах партире тăракан тата партире тăман большевиксен задачи — заем çырăнса илмелли условисене кашни рабочи, служащи тата колхозник патне çитересси. Ĕççыннисене пирĕн заемсем ăçта кайнине, облигацисем тытни мĕнле усă пани тата социализмлă тăван çĕршывăн аслă çĕнтерÿĕсем, çавнашкалах ВКП(б) XVIII съезчĕ лартнă пысăк задачăсем çинчен ăнланмалла, тĕплĕн каласа ăнлантармалла.

Нимĕн иккĕленмелли те çук, пирĕн Чăваш республикинчи ĕççыннисем, яланхи пекех, халĕ те заем сарас ĕçе ăнăçлăн пурнăçлĕç, пурте пĕр кăмăллă пулса Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулти кăларăм) заемне çырăнса илĕç. Çакă вара хамăрăн тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетмелли пысăк вăй пулса тăрĕ.

Я. ПАВЛОВ,
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

Куллен кирлĕ таварсене ытларах туса кăларассишĕн

Правлени тытса тăма кирлĕ-ши?

ИШЛЕИ. Шетмĕпуçĕнчи промартель вуннăмĕш çул ĕçлет. 1938 çулта çак артеле Очкассинчи артельпе пĕрлештернĕ. Иртнĕ çулта ун çумне Тивĕшри ялĕнчи артеле те пĕрлештернĕ. Очкассинчи тата Тивĕшри артельсем хăйсен планĕсене çулран çул тултарса пырайман, вĕсем хăйсене хăйсем те тытса тăма пултарайман.

Çапла вара Шетмĕпуçĕнчи артель пысăкланса кайнă. Халĕ вăл 15 ялти кустарьсене пĕрлештерсе тăрать. Производствăллă бригадăсем пĕтĕмпе 8, вĕсенче 231 çын.

Анчах мĕнле ĕçлет-ха çак артель? 1936 çултанпа артель хăйĕн планне тултарса пыраймасть. Виçĕмçул 128480 тенкĕлĕх продукци туса кăларас вырăнне, 60852 тенкĕлĕх кăна туса кăларнă. Пĕлтĕр Шетмĕпуçĕнчи артелĕн 86700 тенкĕлĕх, Тивĕшри артелĕн 64800 тенкĕлĕх, пĕрле шутласан 151500 тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла пулнă. Вĕсем 43752 тенкĕлĕх кăна туса кăларнă. Кăçал татах та сахалтарах. Иртнĕ çулсенче чĕртавар çук пирки артель час-часах ĕçлемесĕр тăнă пулсан, кăçал вара ун пек мар. Чĕртавар çителĕклĕ, ăна иртнĕ кĕркуннех хатĕрлесе хунă.

Çак артелĕн ĕçне, экономикине, территорине пăхса тухса анализ тусан, акă мĕн курăнать: хальхи вăхăтра артель правлени тытса тăни производствăна убыток кăна кÿрет. Ку пушă сăмах ан пултăр тесе, фактсемпе примерсем илсе кăтартăпăр. Артель çулран çул плана тултарайман пирки кăçалхи январĕн 1-мĕшне 40.806 тенкĕ ытла убыток тÿсет. Вăл шутран кăçалхи март уйăхĕнче членсен пай укçинчен 27.755 тенкĕ ытларах илсе убыток витнĕ. Кăçалхи çула убыток 13050 тенкĕ куçнă. Çакна витме, артелĕн 1941 çулта ытти çулсенчен 5—6 хут ытларах продукци туса кăлармалла.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталти плана 33,1 процент кăна тултарнă пулин те, управлени расхочĕсене 85 процент пĕтернĕ. Смета тăрăх артель аппаратне тытса тăма 18.510 тенкĕ, ытти расходсем 6090 тенкĕ, пĕтĕмпе 24.600 тенкĕ палăртнă.

Вырăнти условисене тата экономикăна шута илсен, çак артеле Ыхракассинчи промартельпе пĕрлештерни усă кÿме пултарать. Артеле пĕрлештерни производствăна вăйлатать. Шетмĕпуçĕнчи артель территорийĕнче 2 бригада вырăнне, виçĕ е тăватă бригада организацилемелле: Шетмĕпуçĕнче, Тивĕшре тата Какаçра.

Какаçра (Элĕк р.) бригада организацилени питĕ кирлĕ. Унта чăпта çапакан станоксем 40 яхăн. Вĕсем çулталăкра 30—40 пин чăпта çапма пултараççĕ.

Шетмĕпуçĕнчи артеле Ыхракассинчи артельпе пĕрлештерсен аппарата тытса тăма каякан расход нумай чакать, 3—4 бригада тытса тăма 6—7 пин тенкĕ кăна расходланать, çапла вара продукцин хăйне ларакан хакĕ те чылай чакма пултарать.

Н. ЯШКОВ.

Çĕнĕ мастерскойсем тăвассине хăвăртлатмалла

ÇĔМĔРЛЕ. Райпромкомбинат кăçалхи пĕрремĕш кварталти плана 135,8 процент, пищекомбинат — 116 процент тултарчĕç. Ку комбинатсем апрель уйăхĕнче те тухăçлăн ĕçлерĕç. Анчах вырăнти чĕртавартан куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ.

Райпромкомбинат куллен кирлĕ таварсем туса кăларас плана пĕрремĕш кварталта 33,7 процент кăна тултарнă. Комбинат ассортимент енĕпе те плана тултарса пымасть. Унăн 1941 çулта 48 тĕслĕ таварсем туса кăлармалла, 22 тĕслĕ таварсем кăна туса кăларать.

Çĕмĕрле районĕнче райпромкомбинат енĕпе çĕнĕ мастерскойсем организацилес тĕлĕшпе те пысăк çитменлĕхсем пур. Райпромкомбинатăн çĕнĕ мастерскойсем 5 организацилемелле пулнă. Вăл шутра çăматă тăвакан производство, тир тăвакан, тумтир, атă-пушмак юсамалли мастерскойсем т. ыт. те. Кунсăр пуçне уйрăм предприятисем çумĕнче çĕнĕ цехсем организацилеме палăртнă. Çак мастерскойсене тума 700 пин тенкĕ ытла укçа-тенкĕ хывма пăхнă. Анчах çĕнĕ мастерскойсем организацилес ĕç пит те çителĕксĕр пырать. Сăмахран, тир тăвакан мастерской валли 50 пин тенкĕ пăхнă, 338 тенкĕ кăна расходланă. Çăматă йăвалакан цеха организацилеме 46100 тенкĕ пăхнă, пĕр пус та расходламан. Пĕтĕмĕшпе илсен, райпромкомбинат 70 пин тенке яхăн кăна расходланă. Райпромкомбинат çак укçапа Пăрачкав районĕнче 2 çурт илнĕ. Урăх нимех те туман тесен те тĕрĕсех пулĕ. Райпромкомбинат аппаратĕнче 7 çын ĕçлет вĕт ха! Мĕн тăваççĕ-ши вĕсем?

Райпищекомбинатăн сăра завочĕ тунă çĕре 700 пин тенкĕ хывма палăртнă. Кунсăр пуçне тата 250 пин тенкĕ тăракан кондитерски фабрика тумалла. Сметăсем, чертежсем хатĕр, анчах банкран ссуда илмен ха.

П—в.

Продукци кăларасси ÿсрĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Хуракассинчи «Ширпотреб» артель кăçал, иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, продукци туса кăларассине чылай ÿстерчĕ.

Плана тултарнине уйрăм кварталсем тăрăх илсе пăхсан, çакă курăнать: 1941 çулти пĕрремĕш кварталта плана çĕр процентчĕпех тултарнă, иккĕмĕш кварталти плана пĕр уйăх хушшинчех 86 процент тултарнă.

Иккĕмĕш кварталта артелĕн 63.740 тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла пулнă. Вăл апрель уйăхĕнче 54.908 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Хальхи вăхăтра стахановла движени татах та анлăрах сарăлса пырать.

ПВХО ĕçне тăрăшса вĕренмелле

Противник территорине тапăнса кĕмелли хальхи средствăсенчен пĕри вăл —авиаци. Авиаци противник территорине пиншер километра кĕрсе кайса, ăна пит те пысăк сиен кÿрет. Çавăнпа та ĕнтĕ, Совет Союзĕнчи кашни гражданинăн тăшман сывлăшран тапăнасмĕн пулсан ăна хирĕç организованно сыхланма: светомаскировка тума, пушарсене сÿнтерме, сиенленнĕ вырăнсене дегазацилеме, суранланнисене пулăшу пама пĕлмелле.

Пирĕн республикăра халăха сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕрентес ĕçе анлăн сарса пыма пур майсем те çителĕклĕ. Çапах та 1940 çулта халăха ПВХО ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе пирĕн ĕçре пысăк çитменлĕхсем пулнă. Кувакино, Улатăр, Шупашкар, Çĕмĕрле районĕсенче çак питех те кирлĕ ĕç çине тимсĕрле пăхнине пула, ПВХО кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе панă плансене пăснă. ПВХО ĕçĕ Октябрьски, Çĕмĕрле, Красноармейски, Вăрмар районĕсенче те япăх пырать.

Сывлăшран тапăнассинчен сыхланма кадрсене массăллă хатĕрлессин пахалăхĕ хальхи требованисене тивĕçлĕн пулса пыраймасть. ПВХО ĕçне вĕренес тĕлĕшпе ирттерекен занятисенче сăмахпа ытларах калаçаççĕ, çавна пула вĕренекенсем сывлăшран тапăнни тата химиллĕ тапăнни çинчен сигнал пулсан, хăйсене мĕнле тыткаламаллине тĕплĕн вĕренеймеççĕ, пушара сÿнтерес, пытанмалли вырăнсене тăвас тĕлĕшпе хăнăху илеймеççĕ.

Предприятисемпе учрежденисем çумĕнче харпăрхăйне сыхламалли группăсем çукки ПВХО тĕлĕшпе ĕçленинче пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Çакăн пек группа республикăра та пĕрре çеç пулнă (Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнче). Анчах Осоавиахимăн хула Совечĕ ертсе пыманнипе вăл та пулин нимĕнле ĕç те туса пымасть.

ПВХО ĕçне вĕренессинче «Готов к ПВХО» коллективлă знак нормине парасси паха норма пулса тăрать. Çав знака илме хатĕрленнĕ май, Осоавиахимăн заводсенчи, учрежденисенчи, пурăнмалли çуртсенчи организацийĕсем хăйсен коллективĕсене ПВХО значокĕн нормисем тăрăх çеç мар, тата светомаскировка тума, пушарсене сÿнтерме, тревога сигналĕсене пĕлме вĕрентеççĕ, харпăрхăйне сыхламалли группăсене туса йĕркелеççĕ. Çак ĕç пирĕн республикăра тивĕçлипе пулса пымасть-ха.

Халăха сывлăшран тапăнассинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма хатĕрлес ĕçе хака хуманнине пĕтерсе, вĕрентÿ ĕçне хальхи требованисен шайне çитерес пулать. Октябрь революци пулни 24 çул тултарнă ятпа — июлĕн 1-мĕшпе декабрĕн 1-мĕш хушшинче — ирттерекен районсенчи, республикăсенчи, Пĕтĕм Союзри химиллĕ VIII-мĕш ăмăртусем халăха ПВХО ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Иртнĕ çулта ирттернĕ химиллĕ VII-мĕш ăмăртусен çитменлĕхĕсене шута илсе, Осоавиахимăн пур организацийĕсен те ăмăртăва хатĕрленес ĕçе халех тивĕçлипе туса пыма тытăнмалла. Ăмăртăва хатĕрленессин тата ирттерессин тĕп задачи çакăнта пулса тăрать: массăсене противогазпа усă курма вĕрентмелле, сывлăшран тапăнассинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланмалли правилăсене вăрçăри пек шая çывхартнă условисенче пурнăçа кĕртме хăнăху памалла. Халăха сывлăшран тапăнассинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма çеç мар, çавăн пекех тата пушарсене сÿнтерме, ишĕлсе аннисене тасатма вĕрентмелле. Çаксене вĕрентесси массăллăн пулса пымалла.

Иртнĕ çулта Çĕрпÿ, Кувакино, Шăхасан, Елчĕк, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче ăмăртусене ирттерес ĕçе хака хуман пирки, вĕсенче ăмăртусем пулаймарĕç.

Пĕтĕм Союзри химиллĕ VIII-мĕш ăмăртусене кăтартуллăн хатĕрленсе ăнăçлăн ирттересси вăл — Осоавиахимăн районсенчи тата пуçламĕш организацисен тивĕçлĕ ĕçĕ.

Ĕççыннисене ПВХО ĕçне вĕрентесси кампанилле йĕркепе пулса пымалли ĕç мар, ăна кашни кун туса пырас пулать. Хальхи вăрçăн опычĕсене шута илсе, сывлăшран тапăнассинчен сыхланма кадрсем хатĕрлессине пысăк пахалăхпа туса пымалла. Уйрăмăнах практикăллă ĕçре вĕрентесси çине ытларах çаврăнса пăхас пулать: тăшмана фугаснăй тата вут чĕртсе яракан бомбăсемпе усă курас-мĕн пулсан, унтан мĕнле средствăсемпе сыхланасси çинчен ĕççыннисене тĕплĕн вĕрентмелле.

Иртнĕ çулсенче ПВХО 1-мĕш сыпăклă значокĕн нормисене панă çынсене малалла та вĕренсе пыма условисем туса памалла. Осоавиахимăн пысăк организацийĕсем çумĕнче ПВХО 1-мĕш сыпăклă значокне илнĕ çынсенчен ПВХО учебнăй отрядне тумалла. Вăл отряда çак командăсем кĕреççĕ: управлени, пушар командисем, дегазаци тăвакан команда тата пулăшу паракан, ишĕлнисене юсакан команда. Управлени командин вышка çинчи тата çĕр çинчи наблюдательсен группи, связистсен группи пулмалла; пулăшу паракан тата ишĕлнисене юсакан командăра çулсене, кĕперсене, водопроводсене, канализацине, электричествăна юсакан группăсем пулаççĕ; дегазаци тăвакан командăра виçĕ группа: разведчиксен, дегазаторсен, боепитани групписем пулаççĕ.

Осоавиахимăн вак предприятисемпе учрежденисенчи организацийĕсенче тунă учебнăй группăсемпе командăсене пĕрлештерме ПВХО учебнăй отрячĕсене Осоавиахимăн районти Совечĕсем çумĕнче тумалла. Отрядсене Осоавиахимăн учебно-стрелковăй подразделенисенче вĕренмен членĕсене кĕртеççĕ.

Харпăрхăйне сыхламалли группăсене тăвасси çав тери кирлĕ задача пулса тăрать. Çак группăсен сывлăшран тапăннипе пулнă инкек-синкексене çийĕнчех пĕтермелле (пушарсене сÿнтермелле, аманнисене пулăшу памалла, химиллĕ тапăннин сиенĕсене пĕтермелле). Халăха сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕрентес тĕлĕшри ответлă задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртме çĕршер обществăллă инструкторсене активлă ĕçе хутшăнтарас пулать. Анчах Ишлей, Калинински, Куславкка, Пăрачкав, Сĕнтĕр, Первомайски, Етĕрне районĕсенче 1940 çулта ПВХО инструкторĕсене пĕр çын та хатĕрлемен. ПВХО инструкторĕсене хатĕрлес ĕç çине тимлĕнрех пăхмалла, кашни инструкторăн ПВХО кружокне, харпăрхăйне сыхламалли звенона е группăна, ПВХО учебнăй отрядĕнчи командăна е группăна ертсе пытăр тесе тăрăшмалла.

Халĕ чылай крайсенче, облаçсенче Осоавиахим организацийĕсем сывлăшран тапăнассинчен сыхланас тĕлĕшпе массăллă ученисем ирттереççĕ. Çак ĕçе пирĕн республикăра та пуçарса ярас пулать. Осоавиахимăн пур организацийĕсен те уйрăм çуртсенче, шкулсенче, предприятисенче, колхозсенче ПВХО ученийĕсене пĕрмаях ирттермелле, çав ученисене Осоавиахим членĕсене çеç мар, ялсемпе хуласенчи халăха та анлăн хутшăнтармалла.

Ĕççыннисене ПВХО ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе малашне калама çук пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсене пурнăçа кĕртме нумай тăрăшни, çине тăни, пуçарулăх кирлĕ. Партипе комсомол, профсоюз организацийĕсем тата пĕтĕм халăх пулăшса пырсан Осоавиахим организацийĕсем хăйсен умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама тата тăван çĕршыва сыхлас ĕçре халăхăн мобилизациллĕ хатĕрлĕхне татах çÿле çĕклеме пултарасси çинчен нимĕн иккĕленмелли те çук.

С. ПАВЛОВ,
Осоавиахимăн Чăваш АССР Центральнăй Совечĕн председателĕ.

Федор Павлович Павлов

Чăвашсен талантлă композиторĕ тата драматургĕ — «Ялта» тата «Судра» пьесăсен авторĕ Ф. П. Павлов çуралнăранпа килес çул 50 çул тултарать.

Ф. П. Павлов чăваш хорĕсен организаторĕ, питĕ ăста дирижер пулнине, музыка ыйтăвĕсем тăрăх хаçат-журналсенче нумай статьясем çырнине тата паллă сатирик-юморист пулнине те эпир питĕ аван пĕлсе тăратпăр.

Вăл 1892 çулта, сентябрĕн 13-мĕшĕнче, Етĕрне уездĕнчи (халĕ Чăваш АССР, Çĕрпÿ районĕ) Патăръел ятлă ялта çуралнă. Иккассинчи икĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă хыççăн вăл Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Ку шкулта вĕреннĕ чухне тата кайран çав шкулта музыкăпа юрă преподавателĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра Ф. П. Павлов чăваш поэзийĕн классикĕпе — К. В. Ивановпа («Нарспи» авторĕпе) çывăх юлташ пулнă. К. В. Иванов литературăпа живопиç енĕпе, Ф. П. Павлов музыкăпа литературăра ĕçлесси çинчен ĕмĕтленсе калаçса çÿренĕ. Ку шухăшсем вĕсен сăмахпа кăна иртмен. К. В. Иванов «Нарспи» ятлă драма çырса, ăна сцена çинче лартса парасшăн пулнă. Декораци те çырнă. Ф. П. Павлов оркестрпа хор валли тата соло (пĕччен) юрламалли сценка та çырса пăхнă. Шкулта «Иван Сусанин» ятлă оперăна выляса пама хатĕрленнĕ чухне те вĕсем иккĕшĕ пĕрле ĕçленĕ. Оперăн пĕр действинче Ф. Павлов дирижер пулать, пысăк ролĕсенчен пĕрне хăй вылять. К. В. Ивановĕ оперăн художник-декораторĕ пулать.

Хăйне арçын хорĕн руководителĕ тунă май, Ф. Павлов нумай сасăпа юрламалли юрăсене арçын хорĕпе юрламалла туса çырать. Çине тăрсах хутăш хор тăвассишĕн кĕрешет.

Юрăсене урăх стройсене куçарса, е хутăш хорпа е арçын хорĕ юрламалла туса çырнă чухне Ф. П. Павлов чăваш юррисене нумай сасăпа, хорпа юрламалла тума кирлине витĕр курса тăрать. Сăнавлă ĕçсем туса пăхать. Çавăнтан вăл композитор пулса пырать. Чăваш юррисене çырса илме, гармонилеме тытăнать.

Чăваш автономийĕ тунă хыççăн вăл чăваш шкулĕсенче ĕçлет, хорсем организацилет, çав хорсенче хăй çырнă, илемлетнĕ юрăсене юрлаттарса тĕрĕслесе пăхать.

Шупашкарта Чăваш педтехникумĕнче музыка ĕçне вĕрентнĕ чухне вăл питĕ лайăх хор организацилет. Ку хор 1923 çулта Мускавра ялхуçалăх выставкинче пулать, чылай паллă вырăн йышăнать. Хор юрланă юрăсенчен чылайĕшне патефон пластинкисем çине çырса илеççĕ («Шупашкар туи», «Олту», «Вĕлле хурчĕ», «Хăйматлăх юрри»). Чăвашсен Государство хорĕн дирижерĕ пулать. Кайран Ленинграда, музыка консерваторине музыка ĕçне вĕренме каять.

Çĕнетнĕ пĕлÿне вăл пире параймарĕ, хăй çырма план туса хунă вăйăллă юррисене çырса хăвараймарĕ. Унăн сывлăхне ÿпке чирĕ сăхса пырса вăхăтсăрах нÿрĕ çĕре чикрĕ. Ф. П. Павлов 1931 çулта, хăй сывлăхĕ начарланнине туйса, кăнтăр енне, Сочири санаторине сывалма кайнă. Анчах та унăн организмĕ хытах хавшаса çитнĕ пулнă. Сочирен часах: июнĕн 2-мĕшĕнче, каçхине 7 сехет те 18 минутăра Федор Павлович вилсе кайрĕ, — тенĕ хыпар Шупашкара — Ф. П. çуралса ÿснĕ республикăн столицине çитнĕ.



Чăваш хорĕсене организацилесси енчен, тата чăваш юррисене нумай сасăпа, музыкăпа пĕрле юрлама илемлетни енчен Ф. П. питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл хора питĕ ăста ертсе пынинчен нумайĕшĕ тĕлĕнсе хавасланса калаçатчĕç, хаçатсем çине çыратчĕç.

Федор Павлович, тарăн шухăшласа, чĕререн тивмелле витĕмлĕ çыракан ăста музыкçă, художник-лирик темелле. Унăн музыкĕ, тĕплĕрех илсе пăхсассăн, чăваш ялĕн пурнăçĕпе хăйĕн кăмăлĕсене çыхăнтарнă лирика. Паллах, унăн пултарулăхĕ пĕр вырăнтах, ним улшăнусăр тăнă темелле мар.

Ф. П. музыкине эпир унăн «Сăрнай», «Ача-пăча юррисем», «Çĕнĕ юрăсем», «Çĕнĕ сăрнай» сборниксем тăрăх тата духовой оркестрпа калама çырнă маршĕ, скрипкăпа фортопиано валли çырнă произведенийĕсем, тата симфониллĕ) оркестрпа каламалли «Сăрнайпа палнай» тăрăх пĕлетпĕр.

Малтанхи юрăсенчех Ф. П. чăваш халăх кĕввисене илсе гармонилене кăна мар, вăл хăйĕн шухăшĕ-кăмăлĕсене художествăллă музыкăпа палăртнă. Кайран çырнă юррисенче те унăн кашнинчех (кулăшлисенче те) лирика сăрхăнать, пур юрринче те вăл хăйĕн тĕп шухăшĕсене палăртать.

Чăвашсен авалтан пыракан этнографиллĕ юррисене Ф. П. питĕ ăста гармониленĕ («Туй», «Хăйматлăх юрри», «Сĕрен», «Тăрна» т. ыт.). Юлашки вăхăталла Ф. П. чăваш ĕçхалăхне валли, паянхи кунсемпе çыхăнтарса, çĕнĕ юрăсем пара пуçларĕ («Харăс, харăссăн утар», «Колхоз юрри», «Çуркуннехи кайăксем», «Çĕнĕ уллах юрри», «Çамрăксен юрри» т. ыт. те).

Ф. Павлов тата ĕç юррисем, колхоз çамрăкĕсене валли вăйăллă юрăсем çырасшăнчĕ. Хăшпĕр поэта сăмахĕсене çырса хатĕрлеме те хушнă.

Музыка фронтĕнче питĕ тăрăшса ĕçлени, музыка пирки каланă сăмахĕсем те, Ф. Павлов чăваш юрри-кĕввине чунтан юратнине, чăваш юрри-музыки ĕçхалăхне культурлатасси енчен пысăк хĕçпăшал пулса тăнине вăл аван пĕлнине кăтартаççĕ.

Унăн произведенийĕсем «Сăрнай», «Çĕнĕ сăрнай», «Çĕнĕ юрăсем» сборниксенче пичетленнĕ. Халиччен пичетленмен юррисем те пур-ха.

Ф. Павлов массăллă революциллĕ юрăсем те чылай çырчĕ. («Харăс, харăссăн утар», «Колхоз юрри», «Хĕрлĕ Çара каякансен юрри», «Çĕнĕ уллах юррисем»). Вĕсем тăрăх эпир Ф. Павлов социализмлă революцие чĕререн çывăх йышăннине кăтартса параççĕ.

Ф. П. Павлов пирĕн чи малтанхи драматургсенчен пĕри. Ăна эпир — «Судра» тата «Ялта» пьесăсен авторне—тивĕçлипе хак хурса аса илетпĕр. Ку пьесăсем Ф. П. Павловăн чи паллă литературăллă произведенийĕсем, пирĕн литературăра вĕсем чылай пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Кусемсĕр пуçне Ф. П. Павлов сăвăсем, калавсем, фельетонсем те çырнă.

«Судра» комеди Ф. П. Павловăн чи вăйлă, пит те тĕплĕн туса çитернĕ произведенийĕ. Чăвашсен малтанхи тата чи лайăх комедийĕ тесе пахалатпăр эпир ăна. 1918 çултах ăна сцена çинче лартма тытăннă, 1919 çултах вăл «Шурăмпуç» журналра пичетленсе тухнă.

«Судра» комедире, пурте ăнланмалла, халăх хăй калаçакан илемлĕ те çивчĕ чĕлхепе çырнăскерĕнче, автор ялти Катăк Çăвар йышши чее карма çăварсене, хуняшшĕне хисеплемен Сăпанисене питлет. Ухтеркке пек пакăлти хресченсен пурнăçĕнчи, йăлари çитменлĕхсене те автор юптаруллă тăрăхласа, йĕплесе илет.

«Ялта» драмăра империализм вăрçи вăхăтĕнчи чăваш ялĕнчи Çтаппан пек кулаксем иртĕнсе пурăннине, вĕсен ирсĕрлĕхне, чухăнсенчен мăшкăланнине, çав хушăрах вĕсене хирĕç тăма ялта хăюллă çамрăксем — Ванюксем пиçсе хатĕрленсе пынине те кăтартнă.

Çиелтен пăхсассăн — лăпкă пек курăнакан чăваш ялĕ, шаларах кĕрсессĕн —тахçантанпа пыракан йăла йĕркисемпе тĕшмĕшлĕх йăлисенчен хăтăласшăн ял — вирлĕн капланса пыракан класс кĕрешĕвлĕ ял — тухса тăрать куç умне. Пьесăсен кашни геройĕн, кашни типĕн сăн-сăпачĕ çирĕп вырнаçса юлать. Куракансăн ăсĕнче вăл автор хăйĕн ĕçне пысăк ăсталăхпа, тĕплĕн шухăшласа туса пынинчен, халăха, çывăх, ăнланмалла çивĕч чĕлхепе çырнинчен килет. Çавăнпа та эпир чăваш юррисен кашни концерчĕпе пĕрех Ф. Павлов юррисене юратсах итлетпĕр, çавăнпа унăн пьесисем халĕ те сцена çинчен анмаççĕ.

Ф. Павловăн тĕрлĕ енлĕ таланчĕ тăратса хăварнă ĕçĕ — унăн творчестви пирĕн искусствăра пысăк та хаклă пурлăх пулса тăрать.

Ĕнтĕ К. В. Ивановпа Ф. П. Павлов ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕчĕç. Пирĕн ирĕклĕ çĕршывра ирĕклĕ чăваш юррисем уççăн янăраççĕ. Чăваш театрĕнче чăвашла постановкăсем пулаççĕ.

К. В. Иванов поэзипе сăввисене пĕтĕм чăваш хушшинче пĕлеççĕ, вĕсене чăваш шкулĕсенче пурринче те вĕренеççĕ. Темиçе чĕлхене куçарса, К. В. Иванов çырнă произведенисене ытти тăван республикăсенче те юратса вулаççĕ. Ф. П. Павлов юррисем те халь халăхсем хушшинче анлăн сарăлса пыраççĕ, вĕсем радио тăрăх Пĕтĕм Совет Союзĕпе янăраççĕ. К. В. Ивановпа Ф. П. Павловăн произведенийĕсем тăрăх пирĕн чи малтанхи оперăсене çырма тытăннă («Нарспи», «Ялта»).

Халĕ Сталинла Конституци хĕвелĕ ăшшинче çĕнĕрен-çĕнĕ творчествăллă вăйсем, искусство ăстисем ÿссе пыраççĕ. Чăваш литературипе искусствинче те К. В. Ивановпа Ф. П. Павлов т. ыт. пуçарнă ĕçсем тĕреклĕн аталанса пыраççĕ.

Ĕçхалăхĕн— социализмран майĕпен коммунизма куçнă тапхăрти пысăк искусствине — формипе нациллĕ, содержанийĕпе пролетариллĕ искусствине тăвас ĕçре çамрăк, хастарлă вăйсем Ф. П. Павлов творчествипе те тивĕçлипех усă курса, социализмлă искусство ăсталăхне хăюллăн вĕренсе пыраççĕ.

Çакă вăл К. В. Ивановпа Ф. П. Павловăн чи паха ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕрсе пынине уççăн кăтартса параççĕ.

Н. ВАСЯНКА.

Республика уйхирĕсенче

Çĕртме сухине июнĕн 5-мĕш тĕлне пĕтерме шутлатпăр

ЭЛĔК. Майăн 29-мĕш тĕлне районра икĕ колхоз — Анаткасри Ворошилов ячĕпе тăракан тата Тури Хурасанти Киров ячĕпе тăракан колхозсем ирхи çĕртме туса пĕтерчĕç. Ирхи çĕртме планне 60 процент ытла тултарнă колхозсем 17. Районĕпе пĕтĕмпе 2.743 гектар ирхи çĕртме тунă, плана 30 процент тултарнă.

Районра çĕртме сухине хакламан колхозсем те пур. Шĕвĕш, Тавăт тата Ефремкасси ялсовечĕсенчи колхозсем çĕртме тума тытăнманпа пĕрех.

Тĕштырăсене акса пĕтернĕ. Халĕ ĕнтĕ туртăм вăйне çĕртме тунă çĕре кўлмелле. Çĕртме планне июнĕн 5-мĕш тĕлне тултарма шутлатпăр.

Çураки ĕçĕсем вĕçленнĕ май районри колхозсенче шыв хуçалăхне йĕркелесси сарăлса пырать. Крымсарайка ялсоветĕнчи Вăрманкас колхозĕ пысăк пĕве тума тытăнчĕ. Элĕкри «Большевик» колхоз пĕве туса пĕтерчĕ. Благоустройство енĕпе те чылай ĕçсем тăваççĕ. Çирикассинчи, Мăн Вылăри колхозсем ял хушшине йывăççем лартаççĕ.

А. ВОЛКОВ,
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Ирхи çĕртмере

ШАХАСАН. Çураки ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Майăн 31-мĕшĕ тĕлне сухалас ĕçсене пĕтĕмпех вĕçленĕ, çав шутран 11.205 гектар акса, ака планне 93 процент тултарнă. Районта пурĕ 67 колхоз, çав шутран 52 колхоз çур тыррисене акса пĕтерне. Халĕ техникăллă культурăсене, пахча-çимĕçсене акасси тата ирхи çĕртме тăвасси анлăн сарăлса пырать. 30 колхозра çак кунсенчех çĕрулми лартса пĕтереççĕ.

Район центрĕнчи «Красный Октябрь», Калинин тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем çĕрулми лартса пĕтернĕ.

Ку таранччен 1000 гектар çинче ирхи çĕртме тунă. Анчах çак ĕçре чăрмавсем те пур-ха. Шăхалĕнчи «Гигант», Юнтапари Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕсем ирхи çĕртмене тракторсемпе сухалассинчен пăрănасшăн пулнă. Туçи-Çармăс, Чуракасси, Троицк ялсовечĕсенчи «III Интернационал», «Оборона», Чапаев, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем çуракине хăвăртрах вĕçлес тĕлĕшпе халĕ те начар ĕçлеççĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Республикăри колхозсем майăн 30-мĕш тĕлне мĕн чухлĕ çуртри акнине кăтартакан сводка

(Процентпа)

РАЙОНСЕМ	Пĕтĕмпе акнă	Тĕштырăсемпе пăрçа ыйшши культурăсем пĕтĕмпе
Улатăр	69,8	77,7
Элĕк	92,0	103,2
Вăрнар	86,2	94,6
Йĕпреç	83,5	95,1
Ишлей	83,3	97,1
Калинински	96,6	100,9
Канаш	94,4	101,7
Куславкка	78,9	86,6
Комсомольски	101,1	102,2
Красноармейски	92,4	106,0
Хĕрлĕ Чутай	91,4	105,5
Кувакино	76,7	83,3
Сĕнтĕрвăрри	78,9	97,2
Октябрьски	83,5	96,9
Первомайски	86,9	94,6
Пăрачкав	74,4	81,9
Советски	90,3	100,1
Сĕнтĕр	90,7	102,9
Вăрмар	92,8	101,0
Çĕрпў	88,1	97,9
Шупашкар	86,2	100,0
Чкаловски	101,1	104,4
Шăмăршă	91,2	96,9
Шăхасан	89,8	96,5
Çĕмĕрле	82,3	100,0
Етĕрне	82,6	96,7
Елчĕк	94,8	98,8
Тăвай	91,2	96,6
Республикипе	88,3	97,5

Çĕнĕ тырра илме хатĕрленеççĕ

Казахстанри колхозсемпе совхозсем кăçал пысăк тухăçлă тырпул туса илеççĕ. Кăнтăрти хăшпĕр районсенче кĕрхи урпана пуçтарма пуçланă. Çĕнĕ тырра илес ĕçе хатĕрленсе, 5 элеватор, «Заготзерно» пункчĕсенче 49 склад тăваççĕ.

Алма-Атара 115 лаборант, склад заведующийĕсем тата счетнăй работниксем хатĕрлеççĕ. Кзыл-Орда облаçĕнче мĕнпур складсене ремонтласа дезинфекци тунă, лабораторисем тата инвентарьсем хатĕрлесе çитернĕ.

Пысăк тухăçлă хăмлашăн кĕрешеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри пур колхозсем те хăмла лартса тăваççĕ. Хăмла колхоза пысăк тупăш парать.

Районра кашни çулах хăмла сутса 25-шер пин тенкĕ тупăш илекен колхозсем сахал мар. Вăрман-Кăршкари Винокуров ячĕпе тăракан, Çичĕпўртри Чапаев ячĕпе тăракан, Мĕшĕлри «Туйташ», Чăнкассинчи Калинин ячĕпе тăракан, Шĕнерпуçĕнчи Маяковский ячĕпе тăракан колхозсем . çулсеренех хăмларан 20—25-шер пин тенкĕ тупăш илеççĕ.

Хăмла туса илес тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартнă бригадирсемпе звеноводсене, стахановецсене иртнĕ çулта Росхмель Чăваш контори укçа парса премилерĕ. П. Фадеев юлташа (Урхаш-Кушкă колхозĕнчен) 150 тенкĕ, С. Кузьмин (Мĕшĕл), Г. Иванов (Тупай Есмĕл), С. Ильина (Энĕшхĕрри Кăршка), Е. Тимофеев (Малти Пукаш), Ф. Малинов (Кив Тутайкасси), Е. Кузьмина (Çичĕпўрт) юлташсем çĕршер тенкĕ илчĕç.

Колхозсем халĕ пысăк тухăçлă хăмлашăн кĕрешĕве тухрĕç. Чăрăш Туçари ВКП(б) Чăваш Обкомĕ ячĕпе тăракан колхозри хăмла бригадирĕ А. Федоров хăйĕн бригадипе кашни кунах хăмла вырăнĕ çинче ĕçлет. Хăшĕ тислĕк турттарса тăрать, хăшĕ катмаклать, хăшĕ хăмлан ытлашши тымарĕсене татаççĕ. Вĕсем — хĕрў ĕçре. Вĕсем хăмлана агротехника кăтартнă пек пăхса, унтан пысăк тупăш илессишĕн тăрăшаççĕ.

Ф. НИКОЛАЕВ.

Тбилисинчи киностуди «Каджана» ятлă çĕнĕ, художествăллă фильм ўкернĕ. Ку фильм XIX ĕмĕр вĕçĕнче грузин хресченĕсем епле асапланса пурăннине кăтартать. ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: артист А. Кавсадзе (сулахайра) старшина Ника ролĕнче.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Пысăк выигрыш

ЛЬВОВ, майăн 29-мĕш. (ТАСС). Иртнĕ çулта облаçри заем тытса тăракан ĕççыннисене государство заемĕсем тăрăх 700 пин тенкĕлĕх выигрыш тўленĕ. Выигрышсене кунсеренех тўлеççĕ. Нумаях пулмасть, Каменки-Струмиловская хулинче пурăнакан К. гражданин 1938 çулта кăларнă шалти заем облигацине перекет кассине пырса кăтартнă. Унăн облигацийĕ 16-мĕш тиражра 10.000 тенкĕ выляса илнĕ.

Заем укçипе шкулсем тунă

Государство заемĕсен дохочĕсенчен вырăнти бюджета юлакан укçапа Полтава облаçĕнчи Ново-Сержанск районĕнче юлашки çулсенче виçĕ шкул çурчĕ, больница, ачасен яслисем тунă, çав укçапа çулйĕрсене юсаççĕ, урамсене симĕслетеççĕ, пусăсем тăваççĕ.

1937 çулта заемсенчен вырăнти бюджета 300 пин тенкĕ юлнă, 1940 çулта ку сумма 1.537 пин тенке çитнĕ. Перещепинск ялсовечĕн бюджетне пĕр 1940 çулта кăна государство заемĕсенчен 90 пин тенкĕ юлнă. Ку укçапа кунта ялти вăтам шкул çуртне тунă.

Союзлă çĕнĕ республикăсенче вĕренў çулне хатĕрленеççĕ

Литва СС Республикинче çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрленме пуçланă. Республикăн хăшпĕр хулисенче 73 пуçламĕш шкул валли тата темиçе вăтам шкул валли çуртсем туса çитереççĕ. Çак ĕçсене тума 30 миллион тенке яхăн уйăрнă.

Молдавия СС Республикинче шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕрентĕве явăçтараççĕ. Августăн 15 мĕшĕ тĕлне ялсенче 47 шкул çурчĕ, хуласенче 6 шкул çурчĕ туса çитереççĕ. Мĕнпур шкулсем валли учительсем тата тăван чĕлхепе вĕренмелли учебниксем хатĕрлесе çитереççĕ.

Мускав—Ялта велочупу вĕçленнĕ

Фрунзе ячĕпе тăракан Çар Академинчи вунвиçĕ слушатель-велосипедистсем, Мускав — Ялта маршрутпа велочупу тунăскерсем, майăн 30 мĕшĕнче 20 сехетре Ялтăна çитнĕ. Вĕсем белосипедсемпе 1.740 километр чупнă.

Хĕрсем-водолазсем

Башкиринчи 25 хулара тата ялсенче водолазсем пулма вĕрентекен курссем организациленĕ. Водолаз ĕçне кунта арçынсем çеç мар, хĕрсем те вĕренеççĕ. Производствăран татăлмасăр водолазсем хатĕрлекен курссенче 200 хĕр вĕренет. Вĕсенчен нумайĕшĕсем — башкиркăсем. Курссенче вĕренекен хĕрсенчен 60-шĕ курсран «хорошо» тата «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухнă.

Чи лайăх водолазсенчен пĕри — Нина Шагалова Бирск районĕнче Освод инструкторĕ пулса ĕçлет. Çак çулта вăл 8 водолаз вĕрентсе хатĕрленĕ. Халĕ Шагалова юлташ водолаз ĕçне татах 43 çынна вĕрентет.

Майăн 31-мĕш. (ТАСС).

Государствăн Белоруссири университечĕ 20 çул тултарать

Июнь уйăхĕнче Государствăн Белоруссири университечĕ 20 çул тултарать, Белорус СС Республикинчи общественность çак куна паллă тума хатĕрленет.

Хăй ĕçлеме пуçланăранпа 20 çул хушшинче университет пысăк квалификациллĕ специалистсем 3 пин çын ытла вĕрентсе хатĕрленĕ, вĕсем хальхи вăхăтра промышленноçра, ялхуçалăхĕнче тата научнăй учреждениисенче ĕçлеççĕ. Июнĕн 24-мĕшĕнче юбилейлă сесси уçăлать. Çак сессине пыма Мускаври, Ленинградри, Киеври, Тбилисири, Львоври, Черновицы хулинчи, Литва, Латви тата Эстони республикисенчи ученăйсене чĕннĕ.

Хаçатра тухнă материалсем тăрăх

„Вăрмарсем тасалăха хисеплемеççĕ"

«Чăваш Коммуни» хаçатăн майăн 13-мĕшĕнче тухнă 110-мĕш номерĕнче «Вăрмарсем тасалăха хисеплемеççĕ» ятлă заметка пичетленсе тухнăччĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Вăрмар райсовечĕн исполкомĕн председателĕ Ярандайкин юлташ пĕлтернĕ тăрăх, заметкăра асăннă фактсем тĕрĕс пулнă. Заметкăна райсовет исполкомĕн ларăвĕнче сўтсе явнă. Çакăн хыççăн район центрĕн учреждениисемпе организацисене урамсене, килкартисене вунă кун хушшинче тасатма хушнă.

Районри сывлăха сыхлав пайĕн заведующине Семенов юлташа тата адмкомисси председательне Рожаев юлташа район центрĕнчи учрежденисем тасалăх йĕркине мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăма, айăплисене ответ тыттарма хушнă.

Решенисем нумай, анчах...

ÇЕРПУ. Районри суту-илў тата ытти хуçалăхлă организацисен 172 сысна самăртмалла. Вăл шутран райпотребсоюз системи тăрăх 75, сывлăха сыхлав тата ача-пăча учрежденийĕсем 67, çу завочĕн 15 сысна самăртма тытăнмалла пулнă.

Çак питĕ кирлĕ те паха ĕçе чылай организацисенче хакламаççĕ. Паянхи куна районĕпе 102 сысна кăна самăртаççĕ. Хăшпĕр организацисем, сăмахран, апат-çимĕç комбиначĕ сысна самăртма пачах тытăнман, пĕр сысна та илмен. Педучилище 10 сысна вырăнне пĕр сысна илнĕ.

Сыснасем илсе самăртасси çинчен сахал мар решенисем йышăннă, анчах вĕсем хут çинчех тăрса юлаççĕ.

К. ЛЬВОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Государственным Издательством ЧАССР выпущены в свет и имеются в продаже во всех магазинах КОГИЗ,а и системы потребительской кооперации:

Произведения классиков марксизма-ленинизма и партийно-политическая литература на чувашском языке.

Автор	НАЗВАНИЕ КНИГИ	Тираж	Цена
Ленин—	О лозунге соединенных штатов Европы	2100	—25
Сталин—	Как понимают социал-демократы национальный вопрос .	3000	—30
Сталин и Ворошилов—	О Фрунзе	3000	—25
Маленков—	О задачах партийных организаций в области промышленности и транспорта	13500	—30
Вознесенский—	Хозяйственные итоги 1940 г. и план развития народного хозяйства на 1941 г.	13000	—25
	Резолюции XVIII Всесоюзной партконференции	11500	—15
	СТЕНОГРАФИЧЕСКИЕ ОТЧЕТЫ:		
	III-й Сессии Верховного Совета РСФСР	2000	4—00
	III-й Сессии Верховного Совета ЧАССР	2500	2—50
	4-й (Юбилейной) Сессии Верховного Совета Чувашской АССР на русском яз.	2000	2—00
	4-й (Юбилейной) Сессии Верховного Совета Чувашской АССР на чуваш. яз.	2500	2—00
	В БЛИЖАЙШИЕ ДНИ ВЫЙДУТ ИЗ ПЕЧАТИ И ПОСТУПАЮТ В ПРОДАЖУ:		
В. И. Ленин—	О государстве	2500	—20
В. И. Ленин—	Государство и революция	3500	2—00
В. И. Ленин—	К деревенской бедноте	2200	1—50
В. И. Ленин—	В защиту социалистического отечества	3000	1—50
И. В. Сталин—	О В. И. Ленине	2400	—75

ТРЕБУЙТЕ необходимые вам книги

во всех магазинах и киосках КОГИЗ'а, во всех районных культмагазинах и в лавках сельпо.

При отсутствии книг в продаже заказы направляйте непосредственно в Госиздат Чуваш. АССР по адресу: г. Чебоксары, Дом печати, 4 этаж.

Госиздат Чуваш. АССР.

КАЗАНСКИЙ ИНСТИТУТ

ИНЖЕНЕРОВ КОММУНАЛЬНОГО СТРОИТЕЛЬСТВА

об'являет осенний прием студентов на 1 курс 1941—42 учебного года.

Институт готовит инженеров-строителей на факультетах:

1. Промышленного и гражданского строительства.
2. Городских путей сообщения.

Принимаются лица, имеющие законченное среднее образование. Отличники средних школ принимаются без испытаний.

Срок обучения 4 года 10 месяцев.

Прием заявлений с 20 июня до 1 августа с приложением:
а) автобиографии,
б) трех фотокарточек (снимки без головных уборов, размером 3×4 см.),
в) справки об отношении к воинской обязанности,
г) паспорт пред'является при личной явке.

Приемные испытания с 1 по 22 августа по следующим предметам:
1) математика,
2) физика,
3) русский язык и литература,
4) иностранный язык,
5) черчение и рисование.

Отличники средних школ и лица, показавшие в результате приемных испытаний отличные успехи, обеспечиваются стипендией.

Одновременно производится прием на заочное отделение.

Заявления направлять по адресу: гор. Казань, ул. Карла Маркса, дом № 70, Приемная комиссия, директору КИИКС'а.

3—2 ДИРЕКЦИЯ.

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ УНИВЕРСИТЕТ

имени В. И. Ульянова-Ленина

об'являет прием студентов на I-й курс следующих факультетов:

1. ГЕОЛОГО-ПОЧВЕННЫЙ: специальности—геология и почвоведение.
2. ГЕОГРАФИЧЕСКИЙ: специальности—география и гидрология.
3. ИСТОРИКО-ФИЛОЛОГИЧЕСКИЙ: специальности—история и литература.
4. БИОЛОГИЧЕСКИЙ: специальности—зоология и ботаника.
5. ФИЗИКО-МАТЕМАТИЧЕСКИЙ: специальности—математика, физика, астрономия, механика и геофизика.
6. ХИМИЧЕСКИЙ: специальность—химия (органическая, неорганическая, аналитическая, физическая).

Срок обучения на всех факультетах 5 лет.

В Университет принимаются граждане Союза ССР в возрасте от 17 до 35 лет, имеющие законченное среднее образование.

Поступающие в Университет подвергаются приемным экзаменам по общим программам для поступающих в ВУЗ'ы, утвержденным Всесоюзным Комитетом по делам Высшей школы.

Приемные испытания будут производиться с 1 по 20 августа ПО СЛЕДУЮЩИМ ПРЕДМЕТАМ:

а) на биологический факультет и почвенное отделение геолого-почвенного факультета: по физике, химии, русскому языку и литературе;

б) на географический и историко-филологический факультеты: по истории СССР, географии, русскому языку и литературе;

в) на геологическое отделение геолого-почвенного факультета: по математике, физике, химии, русскому языку и литературе;

г) на физико-математический и химический факультеты: по математике, физике, химии, русскому языку и литературе.

Кроме перечисленных дисциплин поступающие в Университет независимо от специальности должны сдать экзамен по одному из иностранных языков (английскому, французскому или немецкому).

Отлично окончившие среднюю школу в 1941 году освобождаются от сдачи приемных экзаменов.

Прием заявлений от желающих поступить в Университет будет производиться с 20 июня по 31 июля.

В заявлении должны быть указаны факультет и специальность, избранные поступающим.

Заявления подаются на имя ректора Университета с приложением:
а) автобиографии,
б) аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике),
в) трех фотокарточек (снимок без головного убора) размер 3×4 см.
г) справки об отношении к воинской обязанности,
д) паспорт пред'является лично по приезде.

На стипендию зачисляются принятые на 1 курс без испытаний (отличники средней школы), а также получившие на приемных экзаменах не менее двух третей оценок „отлично", а остальные не ниже „хорошо".

Общежитие и столовая при Университете имеются.

АДРЕС: Казань, ул. Чернышевского, 18, Гос. Университет.

2—1

ЮТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ

Англипе Германи хушшинчи фронтра авиаци кăштах активлăх кăтартать. Майăн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле, тесе пĕлтернĕ Германи командованийĕн сводкинче, Германи самолечĕсем Англин хĕвеланăç çыранĕнчи портсем çине пырса бомбăсем пăрахнă. Германи подводнăй лодки Англин виçĕ пароходне путарнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи самолечĕсем юлашки темиçе эрне хушшинче чи пирвайхи хут Ливерпуль çине пырса тапăннă.

* * *

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче малтанхи пекех чи хаяр çапăçусем Крит утравĕ çинче пыраççĕ. Германи войскисем, тесе каланă Германи командованийĕн сводкинче, Гераклион патĕнче Германи парашютисчĕсемпе пĕрлешнĕ. Германи войскисен ытти чаçĕсем кăнтăр еннелле малалла кайса пыраççĕ. Германи войскисемпе пĕрле, паллă тунă Итали командованийĕн сводкинче, Крит утравĕ çинчи операцисене Итали чаçĕсем те хутшăннă. Англи командованийĕн коммюникинче каланă тăрăх, Англин Крит утравĕнче çапăçакан войскисем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă, вĕсем Германипе Итали чаçĕсене çĕнĕрен пысăк çухатусем тутарттарнă.

Гавас — Офи агентстви Италири хаçатсем тăрăх çапла пĕлтерет: Англипе Греци Крит утравĕ çинчи войскисем каялла чакма пуçланă, вĕсене хĕвелтухăç тата хĕвеланăç енчен атакălаççĕ. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, англичансем утравăн вăта пайĕнче çирĕпленме хăтланаççĕ, унта Псилорити тата Ласити текен çўлĕ сăртсем пур, вĕсем 2.500—2.200 метр çўлĕш шутланаççĕ. Англипе Греци войскисем, тесе пĕлтерет малалла агентство, тинĕс тăрăх хĕçпăшалсемпе продовольстви илсе пыма пултараççĕ, мĕншĕн тесен утравăн кăнтăр хĕрринчи Месара ятлă база вĕсен аллинче тăрать. Италири хаçатсем, тесе вĕçлет агентство хăйĕн пĕлтерĕвне, Крит утравĕшĕн пыракан кĕрешў татах та вăрăма тăсăласси çине пытармаççĕ.

Çурçĕр Африкăра, Тобрукпа Соллум районĕнче патрульсен ĕçĕсем палăраççĕ. Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Германи войскисем англичансен атакине сирсе янă, англичансем Тобрукран татса тухасшăн пулнă. Германи самолечĕсем, тесе каланă сводкăра, Тобрук патĕнче англичансен укреплени туса çирĕплетнĕ позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă тата Англин пĕр çĕрелле пухăнса пыракан войскисем çине пулеметсенчен пенĕ. Англи авиацийĕ Киренаикăра Германипе Италин опорлă пункчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Хĕвелтухăç Африкăра çапăçусем яланхи пекех Галла-Сидамо (Çурçĕр Хĕвеланăç Абиссиния) облаçĕнче тата Аддис-Абебăран кăнтăр енчи кўлĕсен районĕнче пыраççĕ. Итали командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, Итали гарнизонĕсем Англи войскисене çавсавах хирĕç тăраççĕ.

* * *

Иракра Англи войскисем, Басра патĕнчен çурçĕрелле кайса пырса, майăн 30-мĕшĕнче Багдадпа Эль-Фалуджăран 30 километрта тăракан Хан Нукта ятлă пункта йышăннă, майăн 31-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле, тесе пĕлтерет Рейтер агентстви, Англи чаçĕсем Багдад хĕррине пырса çитнĕ, вĕсем Ирак столицин хĕррисене кĕнĕ. Ирак çарĕ, тесе пĕлтерет малалла агентство, перемири тума ыйтнă; Вашид Али Гайлани тата унăн çывăх помощникĕсем çĕршывран тухса кайнă.

Иракра вăрçă ĕçĕсем чарăннă

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 1-мĕшĕнче ирхине 8 сехетре, çакăн умĕн перемири тунă пирки, Иракри вăрçă ĕçĕсем чарăннă. Иракран илнĕ сведенисем тăрăх, июнĕн 1-мĕшĕнче ирхине регент Абдула Багдада таврăннă.

Германири информаци бюровĕ Крит утравĕнчи операцисем çинчен

БЕРЛИН, июнĕн 1-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Иэрапетра сывăхĕнче Германипе Итали чаçĕсем пĕрлешнĕ хыççăн Крит утравĕ çинчи çапăçусем чарăннă. Англичансем Иэрапетрăран пысăк мар суднăсем çине ларса тухса кайма хăтланнă, анчах та çак пункта оккупациленине пула англичансен çав планĕ пурнăçа кĕреймен. Хора-Сфакион сывăхĕнче, Критăн хĕвеланăç пайĕнчи çыранĕнче, тухса кайма хатĕрленсе çитнĕ англичансен войскисене Германи авиацийĕ салатса янă, Англин темиçе танкне пĕтерсе тăкнă. Критпа Çурçĕр Африка хушшинчи шывсем çинче Германи авиацийĕ Англин каялла чакакан войскисене хўтлесе тăракан тинĕс-çар вăйĕсем çине пыра-пыра тапăннă. Критăн кăнтăр çыранĕ çинче стратеги тĕлĕшĕнчен чи кирлĕ те паха пунктсене оккупациленĕ хыççăн, утравăн шалти районĕсене противникран тасатас ĕç пырать.

Англи войскисем Крит утравĕ çинчен пăрахса каяççĕ

ЛОНДОН, июнĕн 1-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин тинĕс министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Крит утравĕ çинче 12 кун хушши çапăçнă хыççăн, Англи войскисене Крит утравĕ çинчен урăх çĕре куçарса кайма йышăннă. Вăрçă пуçланнăранпа чи хаяррăн сарăлса кайнă çак çапăçусенче противник самолечĕсемпе çыннисене питĕ нумай пĕтерне пулсан та, çакă уççăнах палăрнă: авиаци енчен пысăк пулăшу илмесĕр Крит утравĕ çинче Англи тинĕс-çар вăйĕсемпе çĕр çинчи вăйĕсем малашне кĕрешме пултарассине шанма çук. Англи войскисен 15 пине яхăн салтакĕ Египета пырса çитнĕ те ĕнтĕ. Калас пулать, англичансене пысăк çухатусем кўнĕ.

США сеначĕ ютçĕршывсен парохочĕсене сутăн илесси тата конфискацилесси çинчен калакан закон проектне ырланă

НЬЮ-ЙОРК, майăн 30-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, США сеначĕ çĕнĕ закон проектне ырланă. Çак закон тăрăх Америка правительстви Америка порчĕсенче хўтлĕх тупнă ютçĕршыв суднисене 80 суднăна сутăн илме, конфискацилеме пултарать. Закон проекчĕ вăрçă пуçланиччен ютçĕршывсен правительствисен аллинче пулнă суднăсене кăна туянма ирĕк парать. Суту-илў ĕçĕсен сенатри комиссийĕ çапла пĕлтернĕ: Америкăри портсенче çак категорине кĕрекеннисем пысăк мар икĕ судно кăна. Çакăн пек закон проектне представительсен палати ырланă та ĕнтĕ. Халĕ ăна Рузвельт алă пусса çирĕплетмелле.

КĔСКЕН

* Испанири влаçсем панă распоряжени тăрăх июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа кафесемпе ресторансенче палăртса хунă сехетсенче кăна сĕт сутаççĕ.

* Филиппины утравĕсен национальнăй собранийĕн нациллĕ оборонăн комиссийĕн председателĕ çапла пĕлтернĕ: Филиппины утравĕсем нумайĕшĕ кĕтнинчен «хăвăртрах вăрçа явăçса кайĕç. Филиппинын хĕçпăшаллă вăйĕсене çапăçу валли хатĕрлеççĕ».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 2480. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 293, Ф. б. 58×84 п. л.